ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

29 (4391) №, 2014, утă, 17 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Ял сывлăшĕ пахарах

**Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекĕнче нумай ачаллă çемьере пурăнать Эльвира Краснова. Ашшĕпе амăшне, аппăшне тата йăмăкĕсемпе шăллĕне çав тери юрататъ вăл.**



– Вĕсемсĕр пурнăç çук. Кирек ăçта кайсан та юратнă çыннăмăрсемшĕн тунсăхлатăп, – тет хастар пике.

Тăххăрмĕш класс хыççăн вăл Патăрьелĕнчи ял хуçалăх техникумне вĕренме кĕнĕ. Повар профессине алла илесшĕн.

– Тăххăр хыççăнах шкулпа сывпуллашас терĕм. Вун пĕрмĕш класс хыççăнхи экзаменсем шиклентернĕрен те çак çула суйларăм. Патшалăх экзаменĕ çамрăксене çав тери шухăшлаттарать. Кирлĕ чухлĕ балл пухайманнисен шăпи те чĕрене ыраттарать. Ашшĕ-амăшне ĕмĕрлĕх суранлатса хăвараççĕ вĕсем. Питĕ шел, – терĕ Эльвира ассăн сывласа.

Мал ĕмĕтлĕ хĕр мĕн пĕчĕкрен амăшĕпе пĕрле кăштăртатнă. Тĕрлĕ ĕç пурнăçланă вĕсем. Каярах хăй тĕллĕнех апат пĕçерме вĕреннĕ вăл.

– Паянхи кун та аннепе аттене, йăмăксемпе шăллăма техĕмлĕ апатпа савăнтаратăп. Кукăль-пĕремеч кăна мар, çăкăр та пĕçеретĕп. Аннене çамăллăх кӳрес тетĕпçке. Тата эпĕ çĕр улмине çав тери юрататăп. Ăна ăшаласан пушшех çиме кăмăллатăп, – тет вăл хăпартланса.

Пушă вăхăтра вулама юрататъ Эльвира. Кĕнекесемсĕр пусне кĕçнерни кунсерен «Тантăш» хаçата алла илет. Машăпа Даша тата Артемпа Регина «Тетте» журнала кăмăллаççĕ.

– Аппа, ак кунта мĕн çырнă? Вуласа парха, юмахсемпе те паллаштар, – теççĕ чи кĕçĕннисем, пиллĕкри Артемпа виççĕрри Регина.

Пĕчĕкскерсен кăмăлне юрас тесе журналти сăвă-калава вулама тивет. Сăрламалли ӳкерчĕксене те пĕрлех илемлетеççĕ.

Тĕрĕссипе, çуллахи хитре çанталăкра килте ларма юратмасть Эльвира. Вăрманăн сиплĕ сывлăшĕпе уçăлса çӳреме ухута. Çырла, кăмпа пуçтарса хĕле валли компот та, варени те хатĕрлет. Кăмпа тăварласа сивĕтмĕше лартать.

– Мана ял сывлăшĕ пахарах, çавăнпа Шупашкара вĕренме каймарăм. Патăрьелтех юлтăм. Тепĕр сăлтав, хула шавĕ те мана валли мар. Хам лăпкă çын пулнăран лăпкăлăха юрататăп, – тет Эльвира.

*Элиза ВАЛАНС.*

Патăрьел районĕ,
Чăваш Ишекĕ.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Манăн юлташ

Кашни çын çĕр çинче мĕн пĕчĕкрен тус-юлташпа пурăнма тăрăшать. Ман шухăшпа, юлташ пурнăça савăнăç, çăмăллăх, ырăлăх кӳрет.

Манăн та юлташ пур – Лена Ильденеева. Унпа эпир пĕр класра вĕренетпĕр, пĕр парта хушшинче ларатпăр.

Лена мана пур енчен те килĕшет. Вăл çӳллех мар, вăтам пӳ-силлĕ. Сăнĕпе илемлĕ: хура çӳçĕ вăрăм, кăвак куçĕсем пысăк, тирпейлĕ хĕрлĕ тутисем пиçнĕ çырлана аса илтереççĕ. Манăн юлташ яланах таса, хăйне килĕшӳллĕ тăхăнма тăрăшать. Вăл пуринпе те çепĕç калаçать, çынна яланах ырă тума васкать, вăй çитнĕ таран пулăшать. Лена вĕренӳре те тăрăшуллă, лăпкă, йăваш чăваш хĕр ачи. Юлташăм ытларах юрлама, ӳкерме, ал ĕç тума юратать. Пĕлтĕр çĕртме уйăхĕнче эпĕ хамăн тантăшпа «Вăрман юмахĕ» санаторире кантăм. Шел, кăçал пĕччене пулма тиврĕ манăн унта. Çапах та халĕ кашни кун эпир Ленăпа пĕрле. Маншăн чи лайăххи – Лена юлташпа чуна уçса калаçни.

*Олеся КРУГЛОВА.*

Улатăр районĕ,
Çĕнĕ Эйпеç.

# Елчĕк тăрăхĕнче

## Илем – ĕçре



Çын ĕççĕр пурăнма пултараймасть. Çакна мĕн пĕчĕкрен пĕлсе çитĕнеççĕ Патреккелсем. Вĕсем çу кунĕсенче килти хуçалăхра ашшĕ-амăшне тĕрлĕ ĕç тума пулăшаççĕ кăна мар, шкулти сăнав лаптăкне те çитме тăрăшаççĕ. «Пирĕнсĕр тунсăх хамăр лартнă-акнă пахча çимĕçе, илемлĕ чечексене», – теççĕ вĕренекенсем. Çавăнпах тăр ачасем хаваспах шкул пахчине васкаççĕ.

Çуллахи практика вăхăтĕнче тĕрлĕ ĕç тунисĕр пуçне пĕр-пĕринпе курса калаçаççĕ, кану кунĕсем епле иртнипе паллаштараççĕ. Хутшăну кунта питех те хаклă-çке. Канса кăна нимех те пулманнине вĕсем аван ăнланни те паха. Хăтлă çурт-йĕр те, илемлĕ тумтир те, тутлă апат-çимĕç те, тĕрлĕ вăйă-кулă та пачах та ĕçлемесĕр пулманнине вĕрентекенсем пуçламăш классенчех ăша хывма хăнăхтараççĕ. Ачасем вара çакна асра тытма тăрăшаççĕ. Çĕр чăмăрне хĕвел хитрелĕх кӳрет пулсан, çынна вара – ĕç.

Халĕ тăван шкулта вĕренекенсем йăрансене тирпей-илем кӳреççĕ, шăвараççĕ, кăпкалатаççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш кунĕнче пухăннă хăнасем те ачасен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашĕç-и, тен? Вĕсен чечек клумбисем куçа йăмăхтаракан тĕрлĕ çеçкепе илемлĕн курăнса ларнине кам пăхса савăнмĕ? Пахча çимĕç йăранĕсем те хăйсен çимĕçĕсемпе йăтăнса ларнине курса кам кăна тĕлĕнмĕ? Ку çеç те мар. Чи пахи те чи кирли – ачасем мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхни, ăна юратса туни. Шăпах çак тĕллеве пурнăçлать те ĕнтĕ Патреккел шкулĕн йышĕ.

***Т.НИКИФОРОВА.***

Елчĕк районĕ,
Патреккел шкулĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре:** ачасем шкул лаптăкĕнче.

## Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне



Питех те хăвăрт иртеççĕ çу кунĕсем! Чим, çапах та канса юлмалăх, сывлăха çирĕплетмелĕх, нумай çĕннине пĕлмелĕх вăхăт пур-ха хальлĕхе. Ачасем канаççĕ, аслисене пулăшаççĕ, тĕрлĕ ĕç туса савăнтараççĕ.

Шкулта ĕçлекенсем вара Геннадий Петрович Ловкин директор ертсе пынипе хĕрсех çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе классене сăрлаççĕ, чӳречесене çуса тасатаççĕ. «Ачасем кăçал та пĕлӳ тĕнчине яланхи пекех хаваслă кăмăлпа, йăл кулăпа кĕччĕр тетпĕр», – савăнса пĕлтерессĕ юсав ĕçне хутшăнакансем.

***Владимир ТОСКИНЕЕВ.***

Хăвăлçырма шкулĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре:** юсав ĕçĕсем малалла пыраççĕ.

## Хăюсен уявĕнче

Шкулта çу кунĕсенче çулленех ача-пăча сывлăхне çирĕплетме, канăва лайăх ирттерме «Хĕвел» лагерь ĕçлет. Кăçал та вĕренекенсем кунта кăмăлпах çӳрерĕç. Мĕнле кăна мероприяти иртмерĕ пуль çав кунсенче! Вĕренекенсем вĕсене тулли кăмăлпа хутшăнчĕç, савăнчĕç. Чылай çĕннине те алла илме пултарчĕç.

Чи асра юлнă уявсенчен пĕри кашни канакан хăйĕн çӳçне çивĕтлекен хăюпа паллаштарни пулчĕ. Чи малтанах ачасем пăшăрханчĕç те, анчах уяв пуçлансан пит-куçран савăнăç шевли кайма та пĕлмерĕ. Арçын ачасем те, хĕр ачасем те хăйсен банчĕсемпе паллаштарчĕç. Чи ăнăçлисен хуçисене вара парнесемпе хавхалантарчĕç.

Хăйăва кашни хĕр ача тирпейлĕ упрать, унпа мухтанать, вăл пурришĕн савăнать. Хальхинче те вĕсем çакна тĕслĕхпе çирĕплетсе пачĕç.

***Владимир ВЛАДИМИРОВ.***

Таяпа Энтри шкулĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре:** пирĕн хăюсем мĕнрен кая!



## Мускавра та палăрчĕ

Шкулта «Çунатлă çамрăклăх» ача-пăча пĕрлешĕвĕ ăнăçлă ĕçлет. Унăн хастар членĕ Анна Митрофанова «Упрама юрамасть кăларса пăрахмалла. Хĕрреллĕ пăнчă ăçта лартмалла?» проектпа çĕр-шыври çамрăк авторсен проектне хутшăннă. Унăн ертӳçи – Галина Вячеславовна Чернова вĕрентекен. Ик çĕр ытла ача хутшăннă форума çамрăксем çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килсе çитнĕ. Тупăшу хĕрӳ иртнĕ. Анна хăйĕн ĕçне тивĕçлипе хӳтĕлеме пултарнă. Конкурсантка сертификата тивĕçнĕ, унăн ертӳçи вара – Тав хутне. Вĕсене пурне те Патшалăх Думинче наградăсем панă.

Çĕнтерӳçĕсене тăван енре ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Елчĕк тăрăхĕнчен çакăн пек пысăк та сумлă ĕçпе Мускавра пулни хăех пысăк хисепе тивĕç.

***Леонид АТЛАШЕВ.***

**Сăн ӳкерчĕкре:** Анна Митрофанова хăйĕн наука ертӳçипе Г.В.Черновăпа.

Елчĕк районĕ,
Çирĕклĕ Шăхаль шкулĕ.




**Тантăш**
*чăваш ачисен хаçачĕ*

**● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:**
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

**● Редакципе издатель адресĕ:**
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

**● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.**
**428019, Чăваш Республики,**
**Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.**

**● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:**
Тел.: 56-00-23

**● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР**
**А.ЛЕОНТЬЕВ**

**● ТЕЛЕФОНСЕМ**

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

**● РЕДАКТОР**
**В.ФЕДОРОВ**

**● НОМЕР ВУЛАВÇИ**
**Л.ПЕТРОВА**

**● КАЛĂПЛАВÇĂ**
**Н.ПЕТРОВА**

**● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:**
e-mail: tantas@list.ru

**● ТИРАЖ**
**2117 экз.**
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

**● ЗАКАЗ**
**№ 2614**
Пичете утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче ала пуснă.

**● ПИРĔН САЙТ:**
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Итлемерĕм. Аннене...

*«Хаклă редакци! Ку çырăва сирĕн пата ытти ачасене асăрхаттарас тесе çыратăп. Тĕрĕссипе, эпĕ хускатакан ыйту пирки атте-анне пире кашни кун вĕрентсе тăрать. Шел, чи çывăх та юратнă çынсен сăмахне кая юлса çеç ăша хыватпăр, çавăнпа шар куратпăр та.*

*Мĕн пĕчĕкрен анне мана çурăма тÿрĕ тытмалла тесе ятлатчĕ. Эпĕ кĕнекепе пĕкĕрĕлсе ларнă чухне е компьютер ăшне кĕрсе каяслах ларнă чухне атте те пÿрнипе юнамасăр чăтаймастчĕ. Анчах каланине хăлхана чикмерĕм. Вĕсем маншăн ытлашши тата пустуй пăшăрханнăн туйăнатчĕ. Тепĕр тесен, эпĕ спортпа туслă-çке. Эппин, ку маншăн хăрушлăх кăларса тăратмасть теттĕм...*

*Тухтăрсен диагнозĕ нумай кĕттермерĕ – манăн сколиоз пуçланнă. Телее, хальлĕхе пĕрремĕш степенĕ кăна-ха. Çапах хул калаккисем хушшинче ыратни каç енне мăя тата пилĕке те канăç памасть тата пĕр шухăш анратсах ярать: «Аттепе аннене мĕншĕн итлемерĕм-ши?*

***Аня, 15 çулта.***

*Çĕмĕрле».*

**Хуть те мĕн калăр та, пирĕншĕн атте-аннерен ытларах кулянакан çук. Вĕсем эпир йывăрлăха кĕрсе ÿкесрен, кукăр çул çине тăрасран çав тери хăраççĕ. Пирĕн кашни утăмшăн яваплăх туяççĕ, хăйсем тунă йăнăшсенчен сыхлама тăрăшаççĕ. Вĕсен юратăвĕ тинĕсрен те тарăнрах. Çак пысăк та вăйлă туйăм чи капмар тусене те çавăрса хураять. Пирĕн малтанхи утăмсем, сăмахсем… Аттепе анне яланах çумра, пĕр улшăнăва та асăрхамасăр ирттермеççĕ. Вĕсем пире хамăртан та ытларах пĕлеççĕ.**

**Тепĕр чухне çывăх çыннисем хăйсемшĕн ытлашшипех пăшăрханни ачисене вĕчĕрхентерме те пултарать. «Ăшăрах тумлан», «çара пуçăн ан çÿре», «çурăмна тÿрĕ тыт», «компьютер умĕнче нумай ан лар», «çĕрлеччен ан çÿре» – çакăн пек вĕрентсе каланине хăшĕ-пĕри чăтма пултараймасть. Ку йăлтах пĕчĕккисен айванлăхĕ. Атте-аннен юратăвĕ мĕн тери хăватлă пулнине хальлĕхе ăнланса илеймеççĕ-ха вĕсем, унсăрăн ашшĕ-амăшне алă çинче йăтса çÿрĕччĕç.**

**Ачасем, Аня çырăвне вуласан эсир хăвăр валли кирлĕ пĕтĕмлетÿ турăр пулĕ? Апла çурăма тÿрĕ тытсах ларатăр пуль? Аçăр-аннĕре ÿпкелесе ан кулянтарăр. Яланах асра тытăр, пепкине пурнăç парнелекенсем ăна усал сунас çук.**

## Ăслă çынсем çапла каланă

Хуть те хăш ÿсĕмре те аçу-аннÿне хисепле.

***Иккĕмĕш Кĕтерне патша.***

Атте-аннене юратни тата хисеплени – чи таса туйăм.

***Виссарион Григорьевич Белинский.***

Эсĕ аннÿн куçĕнче куляну е лăпкăлăх, тăнăçлăх е пăлхав курма ачаранах вĕренмерĕн пулсан – кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен ĕмĕрлĕхех тĕттĕм çын пулса юлатăн. Кăмăл-сипет тĕттĕмлĕхĕ вара, юратура тискер пулнă пекех çынна нумай инкек, халăха сиен кÿрет.

***Василий Александрович Сухомлинский.***



**Демид МОИСЕЕВ, 14 çулта (Йĕпреç районĕ, Чăваш Çармăс):**
Аслисем сĕнÿ-канаш пани мана пĕрре те тарăхтармасть. Эпĕ çакна йĕркеллĕ пулăм пек йышăнатăп. Мĕншĕн тесен вĕсем пурнăçра темĕн те курнă, пирĕнтен ытларах пĕлеççĕ. Пире ырă çеç сунаççĕ. Вĕсен канашĕсем яланах тĕрĕс утăм тума пулăшаççĕ. Ачасене пурне те ашшĕ-амăшне хисеплеме, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма сунатăп!



**Аня ЛУБАШКИНА, 15 çулта (Улатăр районĕ, Кивĕ Эйпеç):**
Аттепе анне яланах мĕн те пулин вĕрентсе калама тăрăшаççĕ. Пирĕншĕн ытлашшипех кулянни те пулать. Çапах эпĕ кунщăн пачах та вĕчĕрхенместĕп. Çывăх çыннăмсем каланине яланах итлетĕп. Хăшĕ-пĕри тус-юлташĕ умĕнче ашшĕ-амăшне итлекен ача пек курăнасшăн мар. Апла юрамасть. Аслисен канашне итленинче нимĕн япăххи те çук. Вĕсем пире лайăххине çеç сунаççĕ. Унсăрăн йăнăш çулпа каясси те инçе мар. Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук...



**Аня НИКОЛАЕВА, 12 çулта (Куславкка районĕ, Кунер шкулĕ):**
Чи çывăх çынсем пире юратса ÿстереççĕ. Çавăнпа вĕсем пире лайăх, ырă кăмăллă пулма, хамăра лайăх тытма вĕрентеççĕ. Юратнă тĕпренчĕкĕнчен ăслă çын тăвасшăн. Пĕрмай «кун пек ту, ун пек ан ту» тени хăш чухне йăлăхтарса та çитерет. Анчах атте-аннене итлемелле теççĕ. Çывăх çыннăмсене эпĕ яланах тăнлатăп. Анчах тепĕр чухне хам шухăшланă пек те тăвас килет. Туссем, атте-анне сăмахне яланах ăса хывăр. Вĕсем пире лайăххине çеç сунаççĕ.



Лида, санăн ÿсĕмри ачасемшĕн ку йĕркеллĕ пулăм. Пĕрисем хăвăртрах аталанаççĕ, теприсем ачалăхран ниепле те тухаймаççĕ. Тепĕр чухне сана тантăшсен, пĕрле вĕренекенсен хăтланкаларăшĕсем тарăхтарма та пултарĕç, вĕсен калаçăвĕпе шÿчĕсем айванларах туйăнĕç. Санăн çак тапхăра тÿссе ирттерме кăна пĕлмелле. Мĕн килĕшменнине тÿррĕнех калама вăтанса ан тăр. Унсăрăн эсĕ хăвна çухатса такам пек пулма тăрăшăн. Кашни çын хăйне евĕрлĕ. Çак хăй евĕрлĕхе вара сыхласа хăвармаллах.

Юлташу час кÿреннишĕн кулянма кирлĕ мар. Кун пирки вăл хăех пăшăрхантăр, санăн шухăшна та тĕпе хума вĕрентĕр. Унсăрăн ăна малашне йывăр килĕ. Сирĕн туслăхăр вара хĕр тантăшушăн пурнăç урокĕпе танлашĕ.

*«Эпир шăллăмпа тăтăшах тавлашатпăр. Эп каланине вăл пачах итлесшĕн мар. Унпа нихăçан та чуна уçса калаçаймастăп. Хĕр тантăшăмпа вара пачах тепĕр май, эпир тăванран та тăван тейĕн. Ытла та кÿренмелле пулса тухать пек. Шăллăм мана ăнланманни чуна çапса хуçать...*

***Ангелина С., 10 çулта.***

*Вăрнар районĕ».*



Эсир хĕр тантăшупа тăванран та тăван мар, чунпа çывăх. Шăллуна, чăнах та, пĕтĕм вăрттăнлăха каласа параймăн. Хĕр тантăшупа эсир чашăк-тирĕк çăвассишĕн е килти ытти ĕçе кам пурнăçлассине палăртассишĕн çапăçмастăр вĕт-ха. Çитменнине, тусупа пĕр килте пурăнмастăр, эппин, тунсăхлама та вăхăт пур. Шăллупа вара кунĕпех пĕр-пĕрне куратăр. Анчах унăн хăйĕн юлташĕсем, санăн вара – хăвăн. Хĕр туссем пурнăç тăршшĕпе тата темĕн чул та тупăнĕç. Шăллу вара пĕрре çеç. Çавăнпа çывăх тăванна касарма вĕрен. Вăл сана ăнланасса анчах ан кĕт, хăв та сĕнÿ-канашпа пулăшма яланах хатĕр пул.

*«Хĕр тантăшăм ытла туйăмлă – кашни вак-тĕвекшĕнех çилленет. Унăн «ачалла» вăййисемпе шÿчĕсем мана пĕрре те килĕшмеççĕ. Çакăн çинчен калатăп кăна – юлташăма хамран виçĕ кунлăх «сивĕтетĕп». Мĕнле пулмалла-ши? Туслăха татас килмест. Анчах мĕн килĕшменнине те пытарас теместĕп-ха...*

***Лида К., 14 çулта.***

*Етĕрне районĕ».*

ПИРĔН ТАНТĂШ

# Чăваш чĕлхин малашлăхне ĕненетĕп!



**Пирĕн хаçатăн çамрăк корреспонденчĕсем питĕ хастар, хуть те хăш вăхăтра та тĕрлĕрен хыпар пĕлтерсех тăраççĕ, сăвă-калав çырса савăнтараççĕ. Унсăр пуçне вĕсем вĕренӳре те малта пыраççĕ, спортра та палăраççĕ. Çавăн пек маттурсенчен пĕри – Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш шкулĕн улттăмĕш класне кайма хатĕрленекен Наташа Михайлова. Çу уйăхĕнче Шупашкарта иртнĕ Çамрăк корреспондентсен слетне хутшăннă хыççăн пушшех хавхаланчĕ-ха вăл.**

Çуллахи каникулта ял ачисем мĕн ĕçленине такам та тĕшмĕртеет пулĕ. Наташăн чи пĕлтерĕшлĕ ĕçсенчен пĕри – выльăхсене хĕл каçарма утă типĕтсе кĕртесси. Тăрăшни хамăршăнах вĕт-ха, çакна Штанаш хĕр ачи аван ăнланать. Çавăнпа вăл пĕр ĕçрен те хăраса тăмасть. Хурăн çырли те, çĕр çырли те пуçтарчĕ акă, хĕл каçма тутлă та техĕмлĕ варени хатĕр. Каникул вĕçлениччен пурнăçлама палăртса хунă шухăш тата нумай-ха. Пахчари ĕçĕ те пĕтме пĕлмест.

Наташа Михайлова – Штанаш шкулĕн чысне çĕклекен ăслă та пултаруллă хĕр ача. Лайăх вĕреннĕшĕн сахал мар Хисеп хучĕпе Тав çырăвне тивĕçнĕ вăл. Ӳкерчĕксен конкурсĕнче те тăтăшах палăрать. Предмет олимпиадисенче те хастар. Штанаш ял тăрăхĕн аталанăвне хутшăннăшăн та Тав çырăвне тивĕçнĕ вăл. Шахматла выляссипе каллех çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвать. Класра староста тивĕçне пурнăçлаканскере яланах шанма пулать, ушкăна нихăçан та йывăрлăха кĕртсе ӳкермĕ вăл.

Хаçатра пичетленнĕ пĕрремĕш хайлав мĕн тери савăнтарнине çак киленĕçпе «чирлекен» кăна ăнланать пулĕ. Наташа та ун чухнехи çĕкленӳллĕ кăмăлне сăмахпа çеç уçса параймасть, ăна туйса курмалла. Çавăн чухне вăл хаçатпа тачăрах çыхăну тытма тĕллев лартнă та. Ашшĕпе амăшĕн тата вĕрентекенсен ырă сăмахĕсем пушшех хавхалантарнă ăна.

Мĕн çинчен ĕмĕтленет-ши Наташа халĕ? Тата ытларах заметка çырса калем ăсталăхне аталантарасшăн вăл. Тепĕр тĕллевĕ вара – ветеринар пуласси. Çапла, хĕр ача чĕр чунсене питĕ юратать. Инкеке лекнĕ хурт-кăпшанка та шеллет.

Штанаш хĕрĕ паянхи кунпа çеç пурăнмасть. Вăл халăх малашлăхĕ çинчен те шухăшлать. Тăван чĕлхе шăпи те ăна канăç памасть.

– Чăваш чĕлхин малашлăхне ĕненетĕп! Эпир пур вĕт-ха, пирĕн хыççăн та чăвашсемех юлĕç. Тăван чĕлхерен вăтанас йăла çук пирĕн çемьере. Тус-тантăшсем те манпа пĕр шухăшлă. Шел те, район центрĕнче вĕрăсла калаçакан йышланчĕ. Анчах вĕсем те чăвашсемех, тăван чĕлхе илемне туйса унпа ирĕккĕнех калаçма пуçласса ĕненес килет. Ачасене пурне те чăвашла ытларах вулама сĕнетĕп. Мăн асатте-асаннесем вăхăтĕнче мĕнле пурăннине яланах асра тытмалла пирĕн, йăхран-йăха каласа хăвармалла. Унччен хине асра тытсан кăна хамăр малашлăх пирки кулянмалли çук пуль тетĕп.

Çапларах ăслă калаçать Наташа Михайлова. Пирĕн хаçат тусĕсем маттур та пултаруллă, çивĕч ăслă пулнишĕн чунтан хĕпĕртетпĕр.

САВĂНĂÇ

# Ротару пек хитре юрлатăр тенĕ те...

Элĕк районĕнчи Мăн Вылă шкулĕн маттур та пултаруллă вĕренекенĕ Софья Иванова кăçал саккăрмĕш класс пĕтерчĕ. Çуллахи каникулта вăл ытти тантăшĕсем пекех амăшĕн ĕçне çăмăллатать. «Çак хаваслă та савăнăçлă вăхăт ĕçлесех иртет», – тет хĕр ача йăл кулса. Çапах кĕнеке вулама та май тупать тăрăшуллăскер.

Софья Ивановăна шкулта та, ялта та питĕ хисеплеççĕ, юратаççĕ. Илемлĕ сассипе çепĕç юрă шăрантарса такамăн кăмăлне те çĕклĕ вăл. Тăтăшах тĕрлĕрен конкурсра палăраканскер кăçал «Чăваш Ен ахахĕсем» фестивале те хутшăннă. «Мана гала-концерта та чĕннĕччĕ. Анчах тепĕр кунне пирĕн шкулта юлашки шăнкăрав ирттерме палăртнăччĕ, манăн вара çав уява ертсе пымаллаччĕ. Шкула йывăр лару-тăрăва кĕртсе ӳкерес мар тесе эпĕ гала-концерта каймарăм», – каласа парать Софья.

Пур япалан та пуçламăшĕ пур. Юрлас ăсталăхра малтанхи утăмсем тума пулăшнăшăн, сцена çинче хăйне тытма вĕрентнĕшĕн Мăн Вылă хĕрĕ амăшне тата фольклорпа туслаштарнăшăн Светлана Иосифовна Федорова вĕрентекене тав тăвать. Сцена çине пĕрремĕш хут тухни те асра юлатех. Иккĕмĕш класра пулса иртнĕ ку. Софья Элĕкре иртекен «Ӳнер асамачĕ» конкурса хутшăннă. Паллах, питĕ хумханнă вăл. Çапах шикленĕвне çĕнсе чун-чĕре туйăмĕпе юрă шăрантарнă та пĕрремĕш вырăна тухнă. Ку çитĕнӳ хĕр ачана питĕ хавхалантарнă. 2010 çулта Çĕмĕрле хулинче иртнĕ «Раççей, эпĕ сана юрататăп» конкурсра каллех жюри хĕр ачан юрлас ăсталăхне пысăка хурса хакланă, пĕрремĕш вырăн панă. Тепĕр çул Шупашкарта иртнĕ «Сентти» конкурсра вара Софья виççĕмĕш вырăна тухнă. Дипломпа Хисеп хучĕ унăн питĕ нумай.

Хĕр ачана пултарулăхра ытларах амăшĕ хавхалантарать. Вăл – ялти клуб директорĕ. Унăн та сасси питĕ хитре. Юрлас енĕпе хĕрĕ амăшне пăхнă çав. Альбина Анатольевна ялта фольклор ушкăнĕ йĕркелесе янă. Унта кĕçĕннисем те, аслисем те çӳреççĕ. Тата вăлах спектакль лартассипе те ĕçлет. Пултарулăх номерĕсемпе районти чылай яла çитсе савăнтарнă та ĕнтĕ.

Ку хĕр ачан ячĕ те илемлĕ. «Мана София Ротару юрăça кăмăлланăран çапла ят панă. Çитĕнсен эпĕ те ун пекех хитре юрласса шаннă аттепе анне. Унăн юррисем хама та питĕ килĕшеççĕ. Анчах Ротару репертуарĕ маншăн йывăртарах-ха, эпĕ ăна валли ӳссе çитмен», – чунне уçать Раççей çăлтăрĕпе пĕр ятлăскер.



Софийăн йĕкĕреш пиччĕшĕ Степан пур. Амăшĕн варĕнче пĕрле аталаннăскерсем питĕ туслă. Çемье ансамблĕнче те пĕрлех юрлаççĕ. Аппăшĕсем Аньăпа Алена та юрра-ташша ăста. Пĕчĕк йăмăкĕнче Наталийăра та çак пултарулăх палăрать.

«Юрăпа эпĕ чуна уçатăп. Хурланнă вăхăтра та, савăннă чухне те кирлĕ вăл мана», – тет Софья. Эппин, вăл хăйне çынсем умĕнче кăтартас тесе мар, чунĕ ыйтнипе чĕререн юрă шăрантарать, ытисене те илемлĕхе туйма, хаклама май парать.

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Хаваслă вăхăт

Çуллахи вăхăтра никам та – аслисем те, ватти-вĕтти те – килте алă усса лармасть. Пĕтĕм халăх утă çинче чухне кану пирки шухăшламалла-и? Иртен пуçласа каçчен уйра ял çынни. Çитĕннĕ çын та хăш чухне: «Ай, ывăнтăм. Ларса канасчĕ», – тесе нăйкăшкаласа илет. Çамрăксем урăхларах. Вĕсен аллисенче сенĕк выляса тăрать, шӳтлесе кулаççĕ. Пушă вăхăтра та ларма-тăма пĕлмеççĕ. Тĕрлĕ вăйăра савăнаççĕ.

Садик ачисем те кăмăллă çуллахи кунпа.

– Кашни ир садике тухса чупатпăр. Унта та килĕшет пире. Апатне тутлă çитереççĕ, тĕрлĕ вăйăра хамăр пултарулăха туптатпăр. Эпир ĕçчен кайăксем çинчен çырнă сăвăсем те пĕлетпĕр. Акă вĕсенчен пĕрне пурте пĕрле калар-ха, – теççĕ хăпартланса та савăнса.

– Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕ!
Пĕртте канма пĕлмерĕ,
Кунĕпе вĕçсе çӳрерĕ,
Улăм пĕрчи пуçтарчĕ,
Тăмпа шăлса çыпăçтарчĕ,
Хайне йăва савăрчĕ.

– Эпир хамăр аннесене те чĕкеçпе танлаштаратпăр. Вĕсем те ирех тăраççĕ те кунĕпех ура çинче. Пире валли тутлă апат пĕçереççĕ, япаласене çăваççĕ, пӳрт-сурта тирпейлеççĕ, пахча çимĕç çитĕнтереççĕ, – ăшă кăмăлпа йăл кулса сăмах хушаççĕ каллех.

Çапла, çуллахи куна пурте килĕштереççĕ. Çынсем те, кайăк-кĕшĕкĕ те, ӳсентăранĕ те...



Çу, çумăр, çу, çумăр,
Пыл каткипе пыл парап,
Çу каткипе çу парап.



Чăвашсене эп хам куртăм:
Вĕсем ташă ташлаççĕ,
Ак çапла, ак çапла
Вĕсем ташă ташлаççĕ.



Пиллĕкĕн-пиллĕкĕн килтĕмĕр,
Пилĕк çулхи ачана
Пилеш парса хăвартăмăр...



Шăна вĕçсе кĕресрен
Шăналăкне карăпăр.
Шăппăн-шăппăн çывăрма
Шăпчăк кĕвви калăпăр.



Анне, пăх-ха чӳречерен
Интереслĕ япала:
Çерçи чĕппи купăс калать,
Упана качча илет!

Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Кăсăклă ĕçе инçетрен туйнă Спиридон Гнатюк



Спиридон Гнатюк 1928 çулта Волынь облаçĕнчи Гривы ялĕнче çуралнă. Ашшĕ – чухăн хресчен. Пиччĕшĕсем Михаилпа Александр Анăç тата Совет Украинисене пĕрлештерессишĕн кĕрешнĕ. Çапăçу тĕллевĕ пурнăçлансан Спиридон шкулта вĕреннĕ, пионера кĕнĕ. Фашистсем Волыне вăхăтлăх çавăрса илнĕ чухне вăл Торчинри вăрттăн организацире тăнă, каярах вара партизан курьерĕ тата разведчикĕ пулнă. Анчах сутăнчăксене пула ăна гестаповецсем тытаççĕ те 1943 çулхи çĕртме уйăхĕн 25-мĕшĕнче Стырь юхан шывĕ хĕрринче персе пăрахаççĕ.

Волыньти куççульлĕ кĕркунне. Кунĕн-çĕрĕн çумăр пĕрĕхет. Хăш чухне вара сăрт хыçĕнчен сивĕ çил тухать те таса мар кӳлленчĕксене пăтратать, йывăççенчен сарă çулçă тĕркисене туртса илсе шурлăхсенче çухалать... Çул тăрăх шыв юхать, ун çийĕн пĕр лав кичеммĕн ишсе пырать. Лав çинче аслисем иккĕн тата кĕçĕннисем тăваттăн, анчах шăплăха нимĕн те сирмест. Пылчăк сирпĕтекен урапасем çеç ывăннă сасă кăлараççĕ. Сарă çӳçлĕ, çӳллех мар арçын ача хыçалта çара урисене çĕре усса ларса пырать. Тĕттĕм пĕлĕтсем айĕнчи этемсĕр уй-хир çине вăл питĕ салхуллăн пăхать.

Уй-хир çийĕн çилпе пĕрле ула курак вĕçет. Вăл кăлăхах типĕ вырăн шыраса пуçне çавăркалать кăна.

Çул хĕрринче хăлтăр-халтăр пӳрт ларать. Алăкĕ яр уçă. Пӳрт çумĕнче танк гусеницин путăкĕсем курăнаççĕ. Пĕчĕк ача калушĕ йăванса выртать... Мĕнле синкер ĕç пулса иртнĕ кунта? Спиридон куçĕсем тухăç еннелле кайнă вăрçăн хăрушă йĕрĕсене кураççĕ. Астăвăмĕ вара пачах та урăххи çинчен калать.

Ку вăл Хĕрлĕ Çар Анăç Украинăна ирĕке кăларсан пулса иртнĕччĕ. Гнатюксен çемйи тăван Гривы ялĕнчен инçетри Зеленое ялне кайма тухнă, çавăнта унчченхи нимĕç колонийĕнче колхоз йĕркеленĕ. Çак лавпах кайнăччĕ, анчах кунĕ уярччĕ. Кăмăлĕ пурин те хĕвеллĕччĕ. Сашко ывăнма пĕлмесĕр шӳтлесе пычĕ. Михайло вара темĕн тĕрлĕ юрă та пуçласа пачĕ – революципе çыхăннисене те, хаваслисене те.

Катасенче ахрăм янăрарĕ. Спиридон тăтăшах лав çинчен сиксе анса юратнă кроликĕсене валли курăк татрĕ...

# Вăрман курьерĕ

Çавăн пекех 1941 çулхи çу уйăхĕн пĕрремĕш каçĕ аса килчĕ. Клубра пĕтĕм ял пуçтараннă тейĕн. Спиридон вара хумханнипе хĕрелсе кайнă, янăравлă сассипе «Арсеналăн» çамрăк геройĕ çинчен сăвă вулать...

...Тĕттĕм кăвак тĕтре ăшĕнче темĕнле çуртсем курăнса кайрĕç.

– Кунта чарăнăпăр та. Вырăнтан вырăна куçса çӳресе çитет.

Çапла Гнатюксен çемйи Торчин çывăхĕнчи пĕчĕк хуторта чарăнчĕ.

Тепĕр кунне ир-ирех Спиридон кивĕ пиншак уртса ячĕ те Торчина ĕç шырама кайрĕ. Пĕр кулак патĕнче выльăх-чĕрлĕх пăхма килĕшрĕ вăл. Ĕшеннĕскер, пусăранннăскер килне çĕрле тин таврăнма пуçларĕ. Каçхи пур-çук апата сăмах чĕнмесĕр çисен пӳрт хыçĕнчи кивĕ каска патне тухрĕ те чылайччен инçете пăхса ларчĕ. Мĕнле пулать-ха ку? Яланах çапла батрак майĕпе ĕçлесе пурăнмаллаши?.. Уй-хир шăпăртах, нимĕн те хуравламасть.

Çапла вара арçын ача кӳрши, вичкĕн куçлă педагог, юнашар пырса ларнине те асăрхаман. Пĕрремĕш каçхине лешĕ Спиридон çине пăха-пăха кăна илетчĕ тата чарăнмасăр туртатчĕ. Тепрехинче вара çанталăк çинчен калаçу пуçарчĕ, Торчинри хыпарсене ыйтса пĕлчĕ... «Хуçа кӳрентермест-и?» – ыйтрĕ вăл сăмах май. «Йĕксĕк! Батраксене кăшкăрать, выльăха хĕненĕ пек тӳплеттерет кăна, фашистсем ĕмĕр вĕçленичченех пулассипе мухтанать... Уйрăмах хастаррисем çинчен гестапăна евитлесе парать. Унта вĕсен ӳтне сӳсе илни çинчен калаçаççĕ...» «Çапла, сӳсе илеççĕ, – хаш сывларĕ кӳрши. – Хама та тӳсме тӳр килчĕ...» «Хăçан?» – чĕтренсе илчĕ арçын ача. «Пансен Польши вăхăтĕнчех», – вăйсăррăн хуравларĕ лешĕ. «Эппин, эсир... манăн пичче пекех, Михайло пек?» «Мĕн пулнă вара пиччӳпе?» – асăрханса кăсăкланать хайхискер. «Михайло... коммунист... пулнă...» Арçын ача пĕтĕмпех каласа пачĕ...

Вăрçă пуçланни çинчен пĕлтерекен дикторăн çирĕп сасси ял çийĕн саланчĕ. Çынсем пĕтĕм ĕçе пăрахса клуба ыткăнчĕç. Шăп тăрса оратора итлерĕç. Михайло сăмах илчĕ.

– Пирĕн пурин те пĕр пулса тăшмана хирĕç çĕкленмелле. Пурте пĕр пулар! – аллипе сулса илчĕ. Тепĕр кунне вара, анăçран канонада çывхарсан Михайло чылай ентешĕпе пĕрле военкомата кайрĕ...

Каçхине темĕнле шурса кайнă çын çавапа чупса çитрĕ.

– Эпĕ çавăнта... утă çулаттăм... Сасартăк илтетĕп – пăшалтан переççĕ... Унта ыткăнтăм... Выртаççĕ... Сирĕн Михайло та... Çапса тăкнă вĕсене... Фашист десанчĕ теççĕ...

Çемйипех вăрмана васкарĕç. Михайло месерле выртать, пысăк кĕлеткипе симĕс курăка лапчăтнă...

Кӳрши пĕр вăхăт шăп тăнă хыççăн арçын ачана куçран тинкерчĕ. «Эсĕ яваплă ĕç пурнăçлаятăн-ши... партизан?» – «Эпĕ... çулăм ăшне те, шыва та кĕрĕп!» – кăшкăрса ячĕ харсăрскер. Торчинри вăрттăн организаци ертӳçи Павел Осипович Каспрук тата вун виççĕри Спиридон Гнатюк çапла паллашрĕç.

...Волыньте юпа уйăхĕ хуçаланнă вăхăтра пылчăк чĕр куççи таранччĕ. Çулсемпе çуран та, кустăрмапа та кайма çук. Эх, Павел Осиповичăн Спиридона инçе çула мĕн тери ăсатас килмест-çке! Канишук отрядне пĕлтерĕшлĕ хыпар çитерес тесен унăн алă çухрăм ытла каймалла. Каспрук Спиридона аран-аран палăракан вăрман сукмакĕ çине кăларчĕ, тӳмесем лайăх тӳмеленнине тĕрĕслерĕ. Кун хыççăн кун иртрĕ, Спиридон çаплах таврăнмарĕ. Каспрук сăн-пичĕ тĕксĕмленчĕ. Гнатюксен çемйинче канăçсăрлăх хуçаланчĕ...

Пĕррехинче тĕттĕм те çиллĕ каçхине чӳрече кантăкĕ чĕтренчĕ. Павел Осипович çĕкленчĕ те алăк уçма чупрĕ. Палламан çын кĕрсе тăчĕ. Ку Спиридон иккен. Имшерленсе кайнă, куçĕсем кăна çуталаççĕ. «Ну, мĕнле çитрĕн? Фрицсене тĕл пулмарăн-и? Шăнса пăсăлмарăн-и?» – çине-çинех ыйтрĕ Каспрук. «Йĕркеллех, пĕтĕмпех йĕркеллĕ», – аллипе сулчĕ Спиридон. Тăраничченçимесĕрех задание пурнăçланине тата партизан хыпарĕсене пĕлтерчĕ. «Ну пуçтарăнать те вăрманта хăват, – çӳç пайăркине кăмăллăн силлесе илчĕ. – Куратăр акă – гитлеровецсене часах капут пулĕ!» Çуран мĕнле çӳрени, нимĕç машинисем лартса кайни, полицайсен аллине епле лексе вĕсенчен мĕнле майпа тарни çинчен вара пĕр сăмах та каламарĕ...

Тепĕр вăхăтран Спиридона Бринский партизан бригадине кĕрекен Конищук отрядне куçараççĕ.

...Вăрманти пĕчĕк пӳртсенчен пĕринче совет офицерĕ Соколов отряд йĕркеленĕ. Вăхăтăн-вăхăтăн партизансем хĕç-пăшал пуçтараççĕ, пĕчĕк операцисене тухса çӳреççĕ. Анчах отряд çинчен фашистсем те пĕлнĕ, вара Бринский ăна пĕр тăхтамасăр тĕп вăйсемпе çыхăнма хушнă.

Спиридон ун чухне инçе «çул çӳреврен таврăннăччĕ кăна-ха. Çĕнĕ задани çинчен илтсен вара тӳрех ăна пурнăçлама килĕшрĕ. Тăшман салтакĕсем хураллакан ял патĕнчен ăнăçлах иртсе кайрĕç те вĕсем чугун çул патне пычĕç. Ăна тата çирĕпрех сыхлаççĕ. Спиридон ушкăна çӳллех мар, анчах çăра тĕмсем хушшинче хăварчĕ. Хăй вара разведкăна тухрĕ. Ура айĕнче сасă каять, лайăх палăракан хура йĕрсем юлаççĕ. Чугун çул хĕррипе лартнă хурăнлăхсем вара витĕрех курăнаççĕ. Спиридон йĕри-тавра пăхса илчĕ – никам та çук. Рельссем урлă хăвăрт чупса каçрĕ те... фашистсем çине тăрăнчĕ.

Ăна чугун çул будкине илсе кайрĕç, тӳрех хĕнеме тытăнчĕç. «Кам эсĕ?» – тискер чĕр чунсем пек çавăрса илчĕç. «Лишневкăри кĕтӳçĕ», – арçын ачан сенкер кăвак куçĕсем айăпсăр тата кӳреннĕн тинкерчĕç, алли вара хуралса пĕтнĕ хут таткине тăсрĕ. Шыçмак куçлă нимĕç хут таткине илсе тĕплĕн пăхса тухрĕ. Староста алă пуснă, пичет те пур – пĕтĕмпех йĕркеллĕ (партизансен «паспорт сĕтелĕ» алă пуснине евĕрлеме те пĕлет çав). Ĕненмерĕ. Чугун çул çинче инçе те мар Лишневка полицайĕ тăнине аса илсен ăна чĕнтерчĕ. Вăл çитиччен вара арçын ачана хĕнерĕç, аллисене пăрчĕç...

«Тĕрĕссине кала! Партизан-и?» – кăшкăрчĕ фашист. Спиридон шăпăртах... Акă полицай та хашкахашка чупса çитрĕ. Тимлĕн сăнаса пăхрĕ. Çук, арçын ачана аса илеймерĕ, унăн инкĕшне вара лайăх пĕлет, никама та кӳрентерме пĕлмен хĕрарăм...

Шыçмак куçлă нимĕç Спиридона чышкă пачĕ те сĕм тĕттĕмлĕхе кăларса ячĕ. Такăна-такăна, тепĕр хут гитлеровецсем тĕлне пуласран асăрханмасăрах шăхăркаласа утрĕ арçын ача... Кăлăхах. Соколов отрячĕ каç ĕнтрĕкĕнче çухалсах кайнă тейĕн. Партизансем патне пур пĕрех çитсен куç умĕнче сарă тата хĕрлĕ-кăвак çаврашкасем ишетчĕç ĕнтĕ...

Икĕ лав чугун çул патне васкать. Малта Спиридон чĕркуçленсех тĕттĕмлĕхе тинкерет. Çур çулта Соколов ушкăнне тĕл пулаççĕ.

Чугун çул урлă каçнă çĕрте фашистсем сарă çӳçлĕ арçын ачана курма хăнăхса та çитрĕç ĕнтĕ. Лешĕ хăй те тахçанах паллакан çынсене курнă евĕр кивĕ карттус сăмсине перĕнсе вĕсене сывлăх сунса хăварать. Çак карттусра партизан почти çӳренине, хаваслă арçын ача Луцкри вăрттăн организацие «вăрмантисемпе» çыхăнтарнине, лав çинче минăсем е партизансене валли кĕсье хунарĕн батарейкисене пытарнине вара пĕр фашист та тавçăрма пултарайман. Вăйсăр токпа ĕçлеттернĕ хăрушă минăсем Гитлер эшелонĕсене аркатнă кăна...

...Спиридон ывăнма та пĕлмест тейĕн. Хуть ăçта пулсан та каялла ялан шӳт каласа, хаваслă юрă шăрантарса таврăнать. Разведчик çулĕ çинчи хăрушлăхсем çинчен те кулăпа каласа парать.

Пĕррехинче вăл инçетре йывăр задани пурнăçланă хыççăн лагере таврăнатчĕ. Ывăнса çитнĕ ут урисене те кахаллăн куçарать. Хăйĕн вилнĕ асламăшĕ пек кинемее курсан Спиридон тăпах чарăнчĕ. Çывăхрах имшер ĕне курăк çисе çӳрет. «Мĕн эсир, кинемей, ĕнене ав çавăнта илсе каймастăр? Унта курăкĕ те чĕркуççи таранах...» Кинемей пĕркеленчĕклĕ питне арçын ача енне çавăрчĕ те: «Çук, унта герман хăйĕн выльăхне пăхса çӳретĕр... Хурса тухрĕ кунта леш япалисене, тупăран пемеллисене!» «Снарядсем-и?» – хускалса илчĕ Спиридон. «Кам пĕлет ăна, тем ятлă...»

Арçын ача йĕри-тавра пăхса илчĕ. Карчăксăр пуçне никама та курмарĕ. Çийĕнчех симĕс хирелле çаврăнчĕ. Нумай та каймарĕ, снаряд асăрхарĕ. Акă тепри те хĕвел çинче çуталса выртать. Разведчик куçĕсем çунма тытăнчĕç – партизан минерĕсемшĕн ку чăн-чăн мулпа танах! Снаряд пуçтарчĕ те курăкпа витсе хучĕ. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ иртрĕ. Минерсем саваннипе ăна ыталаса илчĕç. Командир тав турĕ, çав вăхăтрах ятларĕ те. Пурнăçпа çапла вылямаюрать-и вара? Часовой курăка сирес тенĕ пулсан? Анчах Спиридон вăрттăн каллех çавăнта каять.



Унтан вăл шуранка тата питĕ пăлханчăк таврăнать. «Вăт мыскара! – каласа парать каярах. – Темĕн чухлĕ снаряд пăрахрăм. Чугун çул урлă каçнă чухне нимĕç чарчĕ мана, шанмасăр пăхрĕ... «Лашу мĕншĕн йĕпе? – тесе ыйтать. – Йывăр тиев турттаратăн-и?» «Мĕнле тиев унта, – тетĕп. – Çĕр улми. Лаши вара хытсах кайрĕ – çитермелли енчен хĕсĕкрех». Каларăм та чĕлхене çыртрăм – хам курăк çинче ларатăпçке...

...Шифровка килсе çитрĕ: вырсарни кун Луцкри вăрттăн организацире тăракансем концлагере тыткăна лекнисен ушкăнне ирĕке кăларасшăн. Хăйсене вăрмана куçарма çыхăнуçă ярса пама ыйтаççĕ. Тĕл пулу вырăнĕ – Львов тата Владимир-Волынский хулисене каймалли çул юппи. Штабра шухăша путрĕç... Нумаях пулмасть пысăках мар ушкăна ирĕке кăларнăччĕ ĕнтĕ. Халĕ концлагере тата çирĕпрех сыхлаççĕ. Хĕтĕртӳ мар-ши? Шăпах çак вăхăтра Спиридон тупăнчĕ. «Кăсăклă ĕçе шăршăпа туятăп. Чăнах та пур-и?» – куçĕсем чеен çуталаççĕ. Командир килĕшсе пуçне сулчĕ те шифровка çинчен каласа пачĕ тата хăйĕн иккĕленĕвне уçса пачĕ. «Тен, каймалла мар?» «Хăтланса пăхмаллах», – терĕ Спиридон çирĕппĕн. – Унта пирĕн çынсем вĕт!»

Ката патне çитсен асăрханса сăнарĕ. Çул юппинче пĕр чун та çук. Акă çул хĕрринче тĕмсем лараççĕ. Ырă мара сиссе арçын ачан чĕри хĕссе илчĕ, анчах правурскер пур пĕрех шоссе патне шуса кайрĕ. Сасартăк тĕмсем хыçĕнчен гестаповецсем сиксе тухрĕç те арçын ачана ярса тытрĕç. Спиридона следователь ыйтса тĕпчерĕ, Ровно хулинчен ятарласа килсе çитнĕскер. «Арçын ача, ят, хушамат тата партизансем çинчен мĕн-мĕн пĕлнине пĕтĕмпех кала! – терĕ следователь чеен. – Вара тӳрех кăларса ярăп». «Кĕтӳç эпĕ, кунтисем мар. Нимĕнле партизансене те пĕлместĕп», – хуравларĕ Спиридон лăпкăн.

Тарăхнипе хĕрелсе кайнă следователь арçын ачана резина чукмарпа хĕнерĕ. Тискер палачсем нушалантарнă вăхăтра та харсăрскер: «Кĕтӳç эпĕ», – терĕ çирĕппĕн.

Тепĕр кунне чи хăрушши пулса иртрĕ. Следователь сăмах чĕнмесĕр шăнкăрав пускăчне перĕнчĕ те патвар гестаповец пӳлĕме ашшĕпе ывăлне тĕксе кĕртрĕ. Спиридон вĕсене куçпа пăталарĕ тейĕн, паллă парас тенĕн: «Кĕтӳç эпĕ, кунтисем мар...» – терĕ. Малтан ăна тăванĕсем умĕнче асаплантарчĕç, кайран – тăванĕсене ун умĕнче. Ашшĕ ывăлне йышăнмарĕ, Сашко вара – шăллĕне.

Янкăр уяр кун Спиридона Стырь юхан шывĕ хĕрне илсе кайрĕç. Хĕвел тата шыв çути ыраттарнăран вăл куçĕсене хупрĕ, уçсан вара хăйĕн умĕнче хура шăтăк курчĕ. Тепĕр енче – ашшĕпе Сашко. Вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхса шăппăн сыв пуллашрĕç.

Ашшĕне вăрттăн организацире тăракансем тарма пулăшрĕç. Пиччĕшне Германие ăсатрĕç, çул çинче вăл пур пĕрех тарчĕ. Выçăскер, çурма чĕрĕскер, инçетри Польшăран партизан отрядне çитрĕ, унта ашшĕпе çеç мар, пĕтĕм çемйипе тĕл пулчĕ.

Гнатюксен çемйи Михаилпа Спиридон вилĕмĕшĕн тата пур совет çыннишĕн те тăшмана пĕр шелсĕр тавăрчĕ.

***Виктор КАВА çырнине выръсларан***
***Лариса ПЕТРОВА куçарнă.***

**(«Днепртан Дунай таран» кĕнекерен)**

# Пĕчĕк пулă – Ылтăн çунат

Пĕр кӳлĕре Шапа çури, Тимĕр шапа çури тата пĕчĕк пулă Ылтăн çунат пурăннă. Вĕсем питĕ туслă пулнă, яланах пĕрле вылянă, шывра ăмăртмалла ишнĕ, савăннă.

Пĕррехинче туссем патне ватă Карас мучи ишсе çитнĕ. Вăл пĕчĕкскерсене питĕ юратнăран тăтăшах парнесемпе хавхалантарнă, мĕн те пулин çĕннине, ыррине вĕрентнĕ, ăслă канашпа пулăшнă. Ку хутĕнче те Карас мучи тутлă кучченеçпе – тутлă та çуллă ăманпа – килчĕ.

– Ну, шăпăрлансем, паян мана мĕнпе савăнтаратăр-ха? – терĕ вăл кăмăллăн.

– Атьăр пытанмалла выляр! Эпир пытанăпăр, эсир вара пире шыраса тупăр! – терĕ Шапа çури савăнăçлăн.

– Ой, ачасем, вăйă выляма эпĕ ватă-çке. Тен, эсир мана сăвă каласа паратăр? Хăшĕ ытларах килĕшет, çавна пĕчĕк парне паратăп, – хуравларĕ Карас мучи.

– Ура! Ура! Эпĕ пĕрремĕш сăвă калатăп! – хаваслăн ишсе тухрĕ Тимĕр шапа çури. Вара кӳлĕ варрине ишсе тухса хыттăн сăвă каласа пачĕ.

– Маттур! – мухтарĕ ăна ватă.

– Халĕ эпĕ калатăп! – терĕ ниçта кайса кĕрейми ăшталанса Шапа çури. Вăл хăйĕн сăввине илемлĕн, аллисемпе хăлаçланса каларĕ. Унăн питех те парнене тивĕç пулас килчĕ-çке.

– Чăн-чăн артист пекех тытатăн хăвна! Маттур! – хавхалантарчĕ ăна та Карас мучи.

– Халĕ сăвă калама Ылтăн çунат тухать! – терĕ Шапа çури хыçалалла çаврăнса. Анчах та халь кăна кунта тăракан тусĕ ниçта та курăнмарĕ.



– Ак тамаша! Ăçта кайса кĕнĕ пирĕн пĕчĕк Ылтăн çунат? – хăрасах ӳкрĕ мучи. – Атьăр-ха шыраса тупатпăр ăна.

Малтан айккине ишсе кайса пытаннă Ылтăн çуната Шапа çури асăрхарĕ.

– Ишсе килĕр ман пата! Вăл кунта-а-а! – йыхăрчĕ вăл ыттисене.

– Мĕншĕн пире пĕлтермесĕр уйрăлса кайрăн? – ыйтрĕ пĕчĕк пулăран ватă Карас.

– Эпĕ сăвă калама пултараймастă-ă-ăп, – йĕрсе ярасла хуравларĕ Ылтăн çунат.

– Айванскер, нихăçан та йăнăшма ан хăра. Эсĕ халĕ вĕренетĕн çеç. Сăвă йĕркисене мансан эпир сана аса илтеретпĕр. Хăюллăрах пул! – лăплантарчĕ пĕчĕкскере мучи.

Ылтăн пулă именчĕклĕн кӳлĕ варрине ишсе тухрĕ те тăраннăн сывласа илчĕ. Вара майĕпен инçетри тинĕсре пурăнакан пĕр пысăк пулă çинчен сăвă калама пуçларĕ. Пурте сывламасăр тенĕ пек итлесе тăчĕç ăна. Кайран алă çупрĕç.

– Халĕ парне пама вăхăт! – терĕ Карас мучи. Манăн шухăшпа ăна Ылтăн çуната парнелемелле. Паян вăл пĕрремĕш хут сăвă каларĕ-çке!

Пурте мучин сăмахĕсемпе килĕшрĕç.

Пĕчĕк пулă савăнăçлăн йăл кулчĕ. «Парнене пурне те пĕр пек пайласа памалла. Тусăмсем те сăввисене лайăх каларĕç-çке», – пăшăрханса шухăшларĕ вăл. Вара парнене пурне те пайласа пачĕ.

– Маттур эсĕ, Ылтăн çунат! Çитменнине тата ăслă, никама та кӳрентермерĕн, – мухтарĕ ăна Карас мучи çурăмĕнчен лăпкаса.

***Нина ЦАРЫГИНА куçарнă.***

# Пурне те шыв кирлĕ!



Шăрăх кунсем пуçланчĕç. Унран хăтăлас тесе çăлăнăç шыраса пĕрисем сулхăнта киленеççĕ, теприсем пĕве хĕррине васкаççĕ. Шел, шывăн турачĕ çук текен каларă-ша нумайăшĕ асра тытмасть. «Шыва кĕме юраман вырăнтах чăмпăлтатакансен йышĕ ӳснĕрен инкек тӳсекенсем те нумайланчĕç», – пĕлтерет Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Енри Тĕп управленийĕ. Кăçалхи çул пуçланнăранпа 16 çын, çав шутра 6 ача, шывра путнă. Çăлавçăсем 8 çынна çăлнă.
Çуллахи каникулта уйрăмах ачасемпе тимлĕ пулмалла. Вĕсене аслисемсĕр пĕве хĕррине ямалла мар. Тепĕр чухне лайăх ишме пĕлекен ача та инкеке кĕрсе ӳкме пултарать. Е тата аслисем пĕр çĕре пуçтарăнса сăра ĕçсе ларнă вăхăтра та тĕпренчĕкĕсем вĕсенчен уйрăлса шыв хĕрринелле ăнтăлма пултараççĕ.
Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ! Хăвăр тĕпренчĕкĕрсене, тархасшăн, куçран ан вĕçертĕр. Сыхланакана турă сыхлатех.

## Те шăнăр туртса лартĕ...

Кĕтӳре. Кунĕ çав тери шăрăх. Ĕнесем те пăчча юратмаççĕ, тапăрта тăраççĕ. Акă пĕр вырăнта йăлăхрĕç курăнать. Шыва кĕрсе тăчĕç.

– Шывсăр пурнăç çук çав. Пурне те: йывăç-курăка та, выльăх-чĕрлĕхе те, этеме те шыв кирлĕ, шыв! – терĕ анне питне шывпа йĕпетсе илнĕ май.

– Ах, мунчари пек ларатăп тар юхтарса. Авă лере шыва кĕме кайса килем-и? – тесе йăлăнтăм аннене.

Вăл ман çине шăтарасла пăхрĕ. Унтан:

– Пĕлмен вырăнта чăмпăлтатса киленес тетĕн-и? Ан аташах, тем инкек курса ларăпăр, – терĕ.

Чăн та, унăн сăмахĕсем шухăша ячĕç.

– Анне, тĕрĕс калатăн-ха эсĕ, юрать вăхăтра асăрхаттартăн. Çитменнине шывра пĕччен ишме те хăрахать. Те шăнăр туртса лартĕ, те шыв тĕпне анса кайăп. Çавăнпа та юнашарах ларам-ха, – терĕм те юратнă çыннăма ыталаса илтĕм. – Сана çав тери юрататăп, сансăр пурнăç кичем пулĕччĕ.

***Саша АНАНЬЕВА.***

Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх.

## Шала ан иш!



***Даша МИХАЙЛОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕсем.***

Уйра хĕрсе утă çулатпăр. Ах, ывăнтăм! Ларса канма шухăшларăм. Акă таçтан çил тухрĕ, пĕлĕтсем кăвакарса килчĕç. Çиçĕм çиçсе аслати авăтма тытăнсан эпĕ çывăхри йывăç айне лăпчăнса лартăм.

– Ачам, аслати вăхăтĕнче йывăç айĕнче тăма юрамасть. Кил кунта, хам çума. Кунта шанчăклăрах, – терĕ атте.

– Мĕншĕн юрамасть? Кунта çумăр та лекмест, – хирĕçлерĕм самантрах тĕлĕнсе.

– Итле аçуна, вăл сана усал сунмасть. Йывăçа аслати çапма пултарать, асăрханмалла, – ăнлантарчĕ вăл аллине ман еннелле тăснă май.

Хăпăл-хапăл атте çумне кайса тăтăм. Ара, эпĕ пурнăçа çав тери юрататăп вĕт-ха, мана килтисемпех пурăнма лайăх.

Ăшă çумăр иртсе кайрĕ. Авă асамат кĕперĕ те тухрĕ. Мĕн тери хитре вăл!

– Ун айĕнчен тухсан арçын ача пулатăн, – тесе каланине аса илтĕм те унталла чупрăм.

Шел, çав тĕле çитеймерĕм, каялла таврăнтăм. Атте кулать.

– Халĕ арçын ача пулаймарăн ĕнтĕ. Апла пулсан, атя, çан-çурăма уçăлтармалла шыва кĕрер. Тулĕк таçта шала ишсе ан кай. Ман çывăхрах пул, – асăрхаттарчĕ кайран.

Эпĕ хаваспах атте хыççăн утрăм. Ара, атте пур чухне нихăçан та шыва кĕме хăрамастăп эпĕ.

***Наташа НИКОЛАЕВА.***

Йĕпреç райĕнĕ,
Çăкалăх.

## Асатте пĕвине кам сыхлĕ-ши?

Атте, анне, асатте, асанне – мĕн тери чуна ăшăтакан сăмахсем. Акă куç умне асатте сăнарĕ тухрĕ. Сарлака хул-çурăмлă, хура çӳçлĕ, патвар та ырă кăмăллăскерччĕ вăл. Ялан тирпейлĕ çӳретчĕ. Вулама юратнăран хаçат-журналпа кĕнекесене алăран ямастчĕ. Ăна ачасем кăна мар, пĕтĕм ял-йыш сума сăватчĕ. Иртен-çӳрен ялан унпа канашлатчĕ.

Ах, асатте... Мĕншĕн пирĕнтен ытла ир уйрăлса кайрăнши? Эсĕ пурăннă чухне санпа ытларах ларса калаçманшăн паянхи кун ӳкĕнетĕп. Ун чухне ытла пĕчĕк пулнă çав, каçар. Халĕ сан пирки асаннерен ыйта-ыйта пĕлетĕп. Шел, вăл та иртнине мана пуçланă.

Çулпа утнă май куç умне ачалăх кунĕсем тухрĕç...

Урамри ачасемпе пухăнса пулла çӳреме кăмăллаттăмăр. Пĕрре çапла пĕве хĕрринчен хавас кăмăлпа килелле утрăмăр. Шăкăл-шăкăл пуплесе пынă вăхăтра такам чĕнчĕ пире. Шăплантăмăр. Çаврăнса пăхрăмăр та – асатте. Хайхискер хапха умĕнчи тенкел çинче кăвакал чĕпписене сыхлать. Вăл пире кăчăк туртса хăй патне чĕнчĕ. Витрери шампăлтатакан пулăсене курсан йăл кулса пирĕн çине тинкерчĕ.

– Ку шултăраскерсене ăçтан тытрăр? – кăсăкланчĕ хайхискер.

– Васлякка пĕвинчен! – терĕмĕр пурте пĕр харăссăн.

Каллех ăшшăн кулса ячĕ.

– Маттурсем! Чăн-чăн пулăçăсем эсир! – тесе мухтарĕ пире кашнине.

Шкула çӳреме тытăнсан, асаттене тĕл пулусене час-час чĕннине кураттăм та тĕлĕнеттĕм.

– Мĕншĕн ăна пурте Василий Яковлевич тесе чĕнеççĕха? – тесе пĕрре мар шухăша путаттăм.

...Пĕррехинче шăллăмпа иккĕн пулăра ларатпăр. Çур витре пулăпа тулсан кăмăл хăпартланчĕ.

– Ку пĕве хăех пулни мĕн тери паха. Çынсене савăнтарать. Пулли те тем чухлех. Ял çынни шыва кĕрсе те савăнать тата! – терĕ шăллăм хавасланса.

– Тем ан калаç! Ăна ял халăхĕ тунă, – тесе самантрах хирĕçлерĕм.

Пĕве хĕрринче иккĕн çеç пулнăран тавлашсах кайрăмăр. Пĕр-пĕрне кӳрентĕмĕр, çавăнпа вăлтасене пуçтартăмăр.

– Килте асаннерен ыйтăпăр. Вăл тĕрĕссине пĕлетех, – терĕм çав самантра.

Чăн та, юратнă çыннăмăр пирĕн тавлашуллă ыйтăва татса пачĕ.

– Аслаçу ĕçчен çынччĕ çав. Вăл 1959 çулта «Прогресс» колхозра водительте ĕçлеме тытăнчĕ. Ун чухне асфальт çул пулман та, çăмăл марччĕ. Кирек кам та ун патне пулăшу ыйтма пыратчĕ. Пĕрин вутă турттармалла, теприн уйран утă кӳрсе килмелле... Никама та: «Çук, пултараймастăп», – тесе каламан вăл. Çумăрлă çанталăкра машинине ялтан вун пилĕк çухрăмра вырнаçнă Шăмата лартса хăваратчĕ. Киле çуран утатчĕ.

Пĕр çулхине ял халăхне пухса пĕве тăвас пирки сăмах пуçарчĕ. Ара, вăл вăхăтра Йĕрĕхкасси тавра пĕвесем пулман-çке. Çуллахи шăрăх кунсенче, юхан шывсем типсе ларсан, кăнтăрла кĕтӳри выльăхсене те витресемпе шыв йăтса ĕçтереттĕмĕр-çке. Анчах ялти ватăсем унпа хирĕç пулчĕç.

– Ял çеремне пăсма ирĕк çук санăн, – терĕç унăн шухăшне сивлесе.

Темле йывăр пулсан та Васли вĕсене ӳкĕте кĕртрех. Çынпа май тупса калаçма, ĕç тума пĕлетчĕ çав. Кĕр енне аслаçу Шăматран бульдозер тупса килчĕ те, çынсем ĕçе пуçăнчĕç. Икĕ ял халăхĕ тăрăшнипе ку пирĕн пĕрремĕш пĕве пулчĕ».

Çавăнтанпа вăл Василий Яковлевич пĕви иккен. Тури çырма вĕçĕнче пулнăран хăшĕсем ăна Çӳлти пĕве тесе палăртаççĕ. Унтан анатрине Васлякка пĕви теççĕ.

Асаннен кашни сăмахне тимлĕн итлесе лартăмăр шăллăмпа. Асатте çинчен нумай япала пĕлтĕмĕр-çке.

Каç енне асаннен кĕçĕн ывăлĕ Коля пичче ĕçрен таврăнчĕ.

– Эсĕ те, ывăлăм, аçу çулĕпе кайрăн. Тăван хуçалăха çĕклессишĕн ырми-канми тăрăшатăн. Ачусемпе, мăшăрупа калаçма вăхăт та çук санăн, – ывăлне шеллерĕ вăл.

Пурте пĕрле сĕтел хушшине лартăмăр. Асанне малалла сăмах çăмхине сӳтрĕ.

Çуркунне ятарласа пĕве сыхлакансене суйланă. Пĕрре çуркунне асатте ĕçпе тухса кайнă чухне асаннене çав вырăна тăратса хăварнă. Шăп çавăн чухне пĕве тулса татăлса кайма пуçланă. Асанне ял халăхне вăхăтра пухса ăна çăлса хăварнă.

Çимĕк кун пĕве тунă çĕрте тăрăшнă икĕ ял халăхне пухса пулă сĕрнĕ те пурне те пĕр пек валеçсе панă. Çамрăксем вара çак пĕвере шыва кĕрсе савăннă.

...Асатте садне кĕрсе тухас терĕм. Йĕри-тавралла хырсем, шĕшкĕсем. Унта 400 ытла улмуççи. Шел, вĕсем ватăлса, чирлесе кайнă.



Асаттен кĕçĕн ывăлĕ, Коля пичче, ашшĕ çулĕпе каяс тенĕ. Агрономра ĕçлерĕ. Колхоз садне те, пĕвесене те пăхса тăратчĕç вăл пур чухне. Хĕллесерен пулăсем валли вак касатчĕç.

Халĕ аякка ĕçлеме çӳрет Коля пичче. Малашне кам сыхлĕ-ши асатте пĕвине? Мĕншĕн тесен пĕр пĕви татăлса кайрĕ, сыхласа çитерейменрĕç.

– Пĕвесене тасатмаççĕ, малтанхи пек пăхмаççĕ, – тет асанне чунтан кулянса.

Сад çумĕнчи хыр вăрманне те кашталăх е вутăлăх кирлĕ тесе унта çӳрекен йышланчĕ. Асатте пур чухне никам та апла хăтланман. Ах, епле сыхласа хăварар-ши садсемпе пĕвесене? Кун пек шăрăхра шывсăр та пурăнма çук, йывăç сулхăнĕ те кирек кама та ырăлăх парнелет-çке.

***Анна ЯКОВЛЕВА.***

Етĕрне районĕ,
Йĕрĕхкасси.

ШУХĂШ

# Тыткăнларĕ чуна Саламппи




Кĕнеке чуна уçать, ăс парать, пурнăçăн тĕрлĕ пулăмĕсемпе паллаштарать. Кашниех хăйĕн пурнăçĕнче тĕрлĕ кĕнекепе туслашать. Александр Артемьевăн «Саламппи» повеçĕ маншăн чи интереслисенчен пĕри пулса тăчĕ. Автор çамрăксене кăсăклантаракан ыйтусене хускатнă: пурнăç çулне тĕрĕс суйласа илесси, туслăхпа юратăва хаклама вĕренесси.

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи хыççăнхи чăваш хĕрĕсемпе каччисем мĕнлерех шухăш-кăмăлпа пурăннине Саламппи, Таруçпа Маруç, Муза, Анатолий Алмазов, Лена, Семен Саланов сăнарĕсем урлă пĕлтĕм. Хайлаври тĕп сăнар Саламппи мана питĕ хавхалантарчĕ, мĕншĕн тесен мĕн тери чăтăмлă, пуринпе те пĕр тан калаçакан, хăйĕн ĕмĕтшухăшне вĕçне çитерекен, пур йывăрлăха пăхмасăр вĕренме ăнтăлакан хĕр вăл! Сăнĕпе те, кăмăлĕпе те, тыткаларăшĕпе те, çирĕп характерĕпе те палăрса тăрать. Çавăнпа паянхи çамрăксемшĕн те ырă тĕслĕх вырăнĕнче пулма тивĕç ку пике.

Хĕр ячĕ-шывĕ каяссине пăхмасăрах, качча каймасăрах, вăрçă вăхăтĕнче ача усрава илет Саламппи. Çакна эпĕ чăн паттăрлăх тесе шутлатăп, мĕншĕн тесен ун евĕр татăклă утăм тума çемьеллĕ çынсем те тăхтаса тăраççĕ. Саламппи юратура çирĕп пулни те чуна тыткăнларĕ. Ăна темиçе каччă килĕштерет пулин те, вăл çăмăлттай мар.

Повеçре Александр Артемьев чăваш халăхĕн йăли-йĕркине те çырса кăтартнă. Маншăн ку та кăсăклă пулчĕ. Сăмахран, салтака ăсатни, çăварни уявĕ халăхи вăхăтра питех асра юмалла иртмеççĕ. Хайлавра çыравçă: «Ăнсăртлăха, шăпана парăнма юрамасть, йывăрлăхран хăрамалла мар, куçпа курсах йăнăша ирттерсе яни киревсĕр. Телей килессе ан кĕт, ăна çывхартма тăрăш», – тесе асăрхаттарни те шухăша ячĕ. Чылай чухне йывăрлăх умĕнче пирĕн алă усăнать, анчах автор сăмахĕсем мана хавхалану кӳчĕç, хамăн пур ĕмĕте те пурнăçлама шанчăк пуррине çирĕплетрĕç.

*Юлия ИВАНОВА.*

Вăрмар районĕ,
Пысăк Енккасси.

ПУРНĂÇ ТАТА ЛИТЕРАТУРА

# *Нихăçан та чыса çухатас марччĕ!*

Питĕ çивĕч те калама çук йывăр ыйту хускатать Сергей Павлов çыравçă хăйĕн «Сĕлкĕш» романĕнче. Куллен тĕл пулакан, чуна ыраттаракан пурнăç ӳкерчĕкĕсем: эрех серепине лекнĕ çынсен телейсĕр шăпи, ĕçке ернĕ ашшĕ-амăшне пула çамрăклах сусăрланнă чунсен пурнăçри терчĕ, асапĕ, ниме тăман шĕвеке пула сăннепитне çухатнă, хĕрарăм, арçын ятне янă «мĕлкесен» ирсĕр сăнарĕсем, çак «симĕс çĕлен» наркăмăшне пулах арканнă вуншар, çĕршер çемьесен нуши... Чăнах та, чуна çӳçентерсе яраççĕ паянхи пурнăçри ку пулăмсем.

Сергей Павлов вулакана тарăн шухăша ярать, пуç ватма хистет. Кам айăплăха çак тӳнтерлĕхсемшĕн? Мĕн патне пырса тухăпăр малашне? Мĕнле çынсем пурăнĕç чăваш ялĕсенче, хулисенче? Мĕнле ăру хуçаланĕ çĕр çинче тепĕр вăтăр, хĕрĕх, алă çултан... Ыйту хыççăн ыйту çуралать «Сĕлкĕш» романа вуланă май. Анчах кам татса парĕ-ши вĕсене?

Ку проблема ĕлĕкех хумхантарнă çынсене, вăл шутра аслă поэтăмăра Константин Иванова та. Çакна вăл «Нарспи» поэминче ӳсĕр чăваш çынни урлă лайăх çутатса парать. Паянхи çыравçăсене те çак ыйтăвах хумхантарать. Сăмахран, Борис Чиндыковăн «Аçу» калавĕнче те, Сергей Павловăн «Сĕлкĕш» романĕнче те асăрхатăн паянхи кунăн «общество чирне», кирек мĕне те черккепе виçнине.

Романа илемлĕ стильпе çырнă. Сергей Павлов çыравçă хăй пăшăрханăвне, ăшри туйăмне палăртас тесе ыйтуллă тата тиресемпе уйрăлса тăракан предложенисемпе усă курать. Кун пек пурăнма юраманнине татăклăн пĕлтерет.

Юлашкинчен пĕтĕмлетсе çакна калас килет: çак пурнăç ӳкерчĕкĕсене кура тăркачах алă сулас марччĕ. Урă пурнăç йĕркишĕн пурин те тăрăшасчĕ. Пуçа çухатсан та чыса çухатас марччĕ. Пуласлăх, малашлăх пирки шухăшласчĕ!

Романри Лисук сăнарĕ мана тĕлĕнтерчĕ те, хумхантарчĕ те. Темĕнле пурнăç авăрне кĕрсе ӳксен те хăйĕн хĕр чысне упраса хăварма пултарчĕ, кăмăлсипетне, çынлăх туйăмне çухатмарĕ, сĕлкĕш лачакине путмарĕ вăл.

*Александра СТЕПАНОВА.*

Шупашкар,
2-мĕш коррекци шкулĕ.

ХАЛАП ХАПХА ТĂРРИНЧЕ

# *Лаша мĕншĕн утă çиет?*



Ĕлĕк-авал лаша хальхи пек карта-витере мар, пӳртрех пурăннă. Хуçипе пĕрле апатланнă. Аш та тиркемен, çăкăра та юратсах кавленĕ, ытларах яшка юратнă, тортшăн каçăхсах кайнă. Сĕтпе пăтă, тĕрлĕ курăкран вĕретнĕ чей, кăштах шоколад уншăн чи паха апат шутланнă.

Çывăрасса та тӳшек çинчех çывăрнă. Лашан пĕртен-пĕр çитменлĕх пулнă – вăл тирпей-илеме юратман, пӳртри чечексене çитĕнме паман. Çакăншăн хуçи ăна яланах ятланă. Лаша тӳрленме сăмах панă, тепĕр кунне вара каллех чечекĕн тин кăна тухма пуçланă çулçисене татса илнĕ.

Пĕррехинче хуçасем лавккаран пин кирпĕч туяннă. Лашана кӳлнĕ те кирпĕчсене лав çине тиесе киле турттарма пуçланă. Кунĕпе ĕçленĕ хыççăн лашан хырăмĕ хытах выçнă.

Каçхине хуçасем апатланнă, утне вара апата чĕнме маннă. Çимеллийĕ те сахалрах пулнă, лаша валли апат юлашкийĕ çеç тăрса юлнă. Çăкăрĕ те çителĕклĕ тупăнман.

Ут тулхăрма пуçланă: «Паянтан сирĕнпе пĕрле пурăнмастăп! Кунĕпе пĕр канмасăр ĕçлерĕм, тăраничен апат çиеймерĕм!» Çапла каланă та урамалла вирхĕннĕ. Кунĕпех улăх-çаран тăрăх чупса çӳренĕ. Хырăмĕ каллех хăй пирки аса илтернипе киле таврăннă. Анчах пӳрте кĕреймен, хуçасем алăка шалтан питĕрнĕ-мĕн.

«Мĕн çимелле, малашне мĕнле пурăнмалла?» – хурланса шухăшланă лаша. Аптăранă енне кил хушшине тухнă та утă капанĕ патне пырса тăнă, типĕтнĕ курăка çиме пуçланă. Утăран торт та, çăкăр та, чей шăрши те кĕнĕ-мĕн. Ку таранччен çинĕ мĕнпур апатран тутлăраххи утă иккен!

Çавăнтанпа лаша тулта пурăнма пуçланă. Сĕлĕ юратать, утă-улăм çиет.

*Дмитрий ИШМЕЙКИН.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш.

СĔНӲ

# «Пакша кучченеçне» ас тивсемĕр

Эпĕ ку таранччен вуласа тухнă чăвашла кĕнекесенчен чи интересли «Пакша кучченеçĕ» пулчĕ. Ăна Н.П. Ишентейпе Г.А. Матвеева пухса хатĕрленĕ. Кĕнекене чăваш писателĕсен чĕр чунсем çинчен çырнă калавĕсене кĕртнĕ. Кăларăм икĕ пайран тăрать: «Вылăха хĕрхенекен – ырă çын» тата «Тискер кайăк та çăлăнăç шырать» – пĕтĕмпе çирĕм виçĕ хайлав. Пурте питĕ интереслĕ.

«Пакша кучченеçĕ» кĕнекери чи кăсăклă калав вара – «Альма». Мĕнпе килĕшрĕ-ха вăл мана? Унти ĕç-пуç вăрçă вăхăтĕнче пулса иртет. Темиçе салтак пĕр-пĕринпе паллашаççĕ. Вĕсенчен пĕрин Альма ятлă лаша пур. Каччăсем ăна пурте юратаççĕ. Альма вĕсемшĕн чи çывăх тус пулса тăрать.

Анчах та Май уявĕ çитесси пĕр эрне юлсан малти линие килнĕ чух тăшман снарячĕ лекнипе Альма вилет. Вара взвод командирĕ салтаксене лаша какайне пĕçерсе çиме хушать, анчах нихăшĕ те ку аша çиме килĕшмест. Альмăна Лиговски канал хĕррине пытараççĕ салтаксем. Калав питĕ хурлăхлă, чуна пырса тиврĕ.

«Пакша кучченеçĕ» калав та çав тери интереслĕ! Унти ĕç-пуç черетленĕвĕ çапларах: пĕр арçын ача колхозниксене апат-çимĕç пама вăрмана каять. Ĕçлекенсем ăна çакăншăн «пакша кучченеçĕпе» хăналасшăн. Анчах та арçын ача килĕшмест – ара, мĕнле-ха, пакша йĕкелне, мăйăрне хăйĕн валли хатĕрлет-хатĕрлет те, унтан вара пĕтĕмпех илсе каяççĕ. Ача чĕр чуна хĕрхеннипе пĕтĕм çимĕçе юман тункати çине хурса хăварать, хăйĕн валли пĕр ывăç мăйăр кăна илет. Арçын ача ырă чунлă, çавăнпа килĕшрĕ те вăл мана.



Халиччен çакăн пек интереслĕ кĕнеке вуламан-тăр эпĕ. Пĕр кăларăмрах чĕр чунсен пурнăçĕ çинчен темĕн чухлĕ кăсăкли çырса панă кăна мар, вĕсен ыратăвне, кăмăлне ĕнентерӳллĕ те витĕмлĕ сăнланă. Вĕсем те чĕрĕ-çке-ха, вĕсен те йăлтах пур: чĕре, туйăм, куççуль, савăнăç... Пирĕнни пек чĕлхе çеç çук.

«Пакша кучченеçĕ» кĕнеке чĕр чунсене юратас, упрас, сыхлас туйăм çуратать вулаканра. Хам кăна мар, ыттисене те вулаттарас килет кăларăма кĕнĕ калавсене.

*Ирина МИХАЙЛОВА.*

Вăрнар районĕ,
Кӳстӳмĕр шкулĕ.

# Хĕвелпе тĕрĕс хĕртĕнер

**Çуллахи кунсенче эпир юхан шыв, пĕве, кӳлĕ хĕрринче нумай вăхăт ирттеретпĕр. Хĕвелпе хĕртĕнсе ӳте илемлĕ тĕс çаптăр тесе тăрăшатпăр. Анчах та кунĕпе унăн вĕри пайăркисем айĕнче пулни сиен кӳме те пултарать. Ытлашши хĕртĕнни хăш чухне сывлăха та хавшатать. Апла тăк ӳт ытла пиçсе каясран çак правилăсене пăхăнар.**



Кунта чи кирли – хĕвел айĕнче тĕрĕс пĕлсе пулни. Ирхи вун пĕр сехетрен пуçласа каçхи 16 сехетчен чи шăрăх тапхăр шутланать. Çавăнпа та чи юрăхлă вăхăт – ирхине 9 сехетрен пуçласа 11 сехетчен, каçхине 16 сехетрен тытăнса 19 сехетчен. Ӳт хитре тĕслĕ пултăр тесен темиçе кун кирлĕ, пĕр кун хушшинче çеç ăна хамăра кирлĕ тĕс çапмĕ. Малтанхи кунсенче вунă минутран ытлашши хĕртĕнмелле мар, каярахпа çак вăхăта майĕпен икĕ-тăватă минут ӳстермелле. Чи нумайăи – икĕ сехет. Унтан ытла юрамасть.

Ӳт хăвăртрах хĕрелтĕр тесен шыва кĕрсе тăмалла е ун çывăхĕнче хĕртĕнмелле. Унта пайăркасен витĕмĕ вăйланать. Шывран тухсан ал шăллипе типĕнмесен те ӳт часрах хĕрелет. Мĕншĕн тесен шыв тумламĕсем линза евĕр пайăркасен витĕмне ӳстерессĕ. Çавна май пĕрремĕш кун пляжа кайсан шывран аяккарах вырнаçни лайăхрах. Шывра ишнĕ хыççăн та ӳте ал шăллипе типĕтĕр.

Пляжа кайнă чухне хăвăрпа пуçа тăхăнмалли тата ĕçмелли шыв илĕр.

Ӳт яка тата илемлĕ пиçтĕр тесен хускалмалли вăйăсем выльăр (сăмахран, волейбол).

Енчен те киле çитсен ӳт пĕçернине туйсан ятарлă е ача-пăча кремĕпе усă курăр. Вăл та, ку та çук тăк, пиçсе кайнă тĕле йӳçĕтнĕ сĕт е хăйма сĕрĕр.

Хĕвелпе хĕртĕнме каяс умĕн апатланма ан тăрăшăр. Выçăлла та кайма юрамасть. Апат çинĕ хыççăн кăштах вăхăт иртмелле.

Ӳт сисĕмлĕ-туйăмлă пулсан хĕвелпе хĕртĕнни те çителĕклĕ. Унта хĕвелĕн ӳте хĕртсе тĕс паракан пайăркасен 65 процентĕ çеç çитет.

Пляжа каяс умĕн супăньпе ан çăвăнăр. Лосьонпа, тоникпа, одеколонпа, ырă шăршăллă шывпа та усă курмалла мар. Унсăрăн хĕртĕннĕ хыççăн ӳтре пӳрлешкесем, тĕрлĕ пăнчă тухма пултарассĕ.

Хĕвелпе хĕртĕнес умĕн çур сехет маларах ятарлă кремпа усă курăр. Ăна пур тĕле те пĕр пек сĕрĕр. Сăмсана, çамкана, кăкăр тĕлне, хулпуççие, чĕркуççие ытларах сĕрсен те юрать. Мăй, хул айĕ тата хăлхан аялти пайне те тимлĕх уйăрма манмалла мар. Кĕлеткен çак пайĕсем маларах пиçсе каяççĕ, çавăнпа унта крем нумайрах сĕрмелле.

Шыва кĕрсе тухнă хыççăн кашнинчех кремпа тепĕр хут сĕрĕнĕр. Çӳçпе тутана та ультрафиолет пайăркасенчен сыхлакан ятарлă косметика хатĕрĕсем сĕрĕр.

Хĕвелпе хĕртĕнни кăмăл-туйăма та лайăхлатать. Апла тăк ун ăшшинче нумайрах, анчах та асăрханса пулма тăрăшăр!

## Сĕнӳсем

***Пирĕн тепĕр чух апат та тăварсăр е техĕмсĕр пулкалать, юратнă тумтир çуса ямалла мар вараланса кăмăла пăсать, ытти пăтăрмах та сиксе тухкалать. Вĕсенчен хăтăлма вара çак сĕнӳсемпе усă курар.***

•Шурă тумтир çинчи тарпа вараланса сарă тĕс çапнă тĕлсене 1 чей кашăкĕ чашăк-тирĕк çумалли шĕвеке, 3-4 кашăк водород йӳçĕкне (перекись водорода), 2 апат кашăкĕ апат содине хутăштарса тасатма пулать. Пулнă хатĕре таса мар тĕле сĕрмелле те кăштах кĕтсе тăмалла.

•Тимĕр савăт-сапа тутăхсан ăна çурмалла каснă пуçлă сухан татăкĕпе тасатмалла. Духовкăри тимĕр ывăса çурмалла каснă чĕрĕ çĕр улми татăкĕпе тата вĕтĕ хăйăрпа тасатма пулать.

•Чейнике известь ларсан унта шывпа лимон татăкĕсене е сĕткенне ярса вĕретмелле.

•Рис кĕрпи ытлашши çемçелсе ан кайтăр тесен ăна кăшт уксус хушнă шывра пĕçерĕр. Кайран дуршлагра таса шывпа çăвăр.

•Сĕт часрах вĕреме кĕтĕр тесен унта кăштах сахăр песокĕ ярăр. Савăт хĕррине шал енчен мĕнле те пулин çупа сĕрсен вĕреме кĕнĕ сĕт хăпарса тăкăнмасть.

•Çĕр улмине хуппипе пĕçеретĕр тĕк ăна вилкăпа темиçе çĕртен шăтарăр. Ун чух çимĕç çурăлса ванмасть.

•Пиçнĕ чăх какайĕ тутлăрах та техĕмлĕрех пултăр тесен ăна тӳрех шывран кăларса тепĕр савăта хурăр. Тăвар сапăр та çиелтен ал шăллипе витĕр.

•Икерчĕ чустине 2 чей кашăкĕ чухлĕ крахмал хушсан икерчĕсем çӳхерех те тутлăрах пиçеççĕ.

•Тăпăрчă пӳремечне çиелтен кăштах апат соди сапсан унăн тĕсĕ хĕрлĕрех пулать.

•Савăт-сапаран тип çу шăрши кĕрет тĕк ăна типĕ горчицăпа çăвăр.

•Вăйлă вараланнă ал шăллисене çакăн пек тасатма пулать: пĕр пысăк хуçалăх супăньне (хозяйственное мыло) теркăпа хырса кастрюле ярăр, 100 грамм силикат çилĕмне хушăр, вара унта ал шăллисене хурса шыв ярăр. Савăта газ çулăмĕ çине лартăр. Вĕреме кĕрсен çулăма кăшт пĕчĕклетсе 10-15 минут тытăр. Хыççăн ал шăллисене кăларса çийĕнчех ăшă шывпа чӳхемелле.

# Килĕшӳллĕ прическа суйлар-и?



**Хамăр суйласа илнĕ прическа тепĕр чухне пире илемсĕрлетме те пултарать. Çӳçе кастарнă е пуçтарса тирпейленĕ чух пит формипе килĕшӳллĕ прическа тумалла. Ун чухне пикесем тата илемлĕрех те илĕртӳллĕрех курăнĕç.**

Кашнийĕн пит форми тĕрлĕрен. Пурĕ вĕсем пиллĕк – тăрăхли, виç кĕтес евĕрри, тăваткал евĕрри, тӳркĕтеслĕх евĕрри тата çавраки.

Тăрăхла питлисене пур прическа та каять. Челка кастарсан та, унсăр та, тӳрĕ е кăтра, кĕске е вăрăм çӳç те аван.

Пит виç кĕтеслĕх формиллĕ пулсан çӳçе варринчен мар, айккинчен уйăрнă, пит шăммисене кăшт хупласа тăракан прическа кирлĕ. Çамкана та çӳçпе кăшт хупласан юрать. Çурма çаврака евĕр каснă челка та кунта килĕшӳллĕ курăнать.

Тăваткал питлисен кăтра, çӳç вĕçĕсене тикĕс мар кастарнă прическа суйласан аван. Тураса якатнă, пите пĕтĕмпех уçă çӳç кунта вырăнсăр пулать. Çăра, вăрăм, тӳрĕ челкăран та хăтăлма тивет. Вăл ахаль те сарлака янаха тата сарлакарах, йывăртарах кăтартать.

Тӳркĕтеслĕх евĕр питлисен хăлхасене тата пит çăмартисене, тăнлава çемçен хуплакан прическа суйламалла. Çамкана айккинеле тураса янă е вăрăм, тӳрĕ челкăпа хупламалла.

Çаврака питлисене çӳç вĕçне тĕрлĕ вăрăмăшпа кастарнă прическăсем каяççĕ. Çӳçĕн çӳлти пайĕ (хăлхасем патĕнчен пуçласа) кăпăшрах пулсан аван. Çаврака пите тăрăхларах кăтартакан прическа суйлама тăрăшмалла.

Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.

# Хураçка

*Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем*

Ирех картише тухрăм. Юратнă тусăм кĕтет-çке. Кĕлет еннелле чупса кайрăм.

– Хураçка, ăçта эсĕ? – чĕнтĕм йытă çурине.

Нимĕнле сас-чӳ те пулмарĕ. Чим-ха, ăçта çĕтнĕ вăл? Ара, йăвинчех паппа тăватчĕ-çке.

Икĕ куна кулянса irttертĕм. Çук, таврăнмарĕ тусăм киле. Каçхине вара минтере ыталаса макăртăм.

– Диван çумне витре лартса памалла пулĕ. Унсăрăн куççулӳ пӳрте юхтарса кайĕ. Вара ăçта пурăнăпăр? – терĕ аппа юнашар вырнаçса.

Хирĕç чĕнмерĕм. Ăçта унта? Чун ыратать. Сисмесĕрех çывăрса кайрăм.

...Çĕрле. Уйăх пытаннă. Тĕттĕм. Пĕлĕтре унта та кунта çăлтăрсем çунаççĕ. Вĕсен сивĕ çути чуна çӳçентерет. Ялта шăп.

Тротуар çинчи шурă юра чĕриклеттерсе икĕ çамрăк утать. Чим-ха, вĕсен хыçĕнче – Хураçка. Тăрук ыйхăран вăраннă пек шарт сикрĕм. Мĕскĕн чĕрем нихçанхинчен хăвăрт тапа пуçларĕ. Пĕтĕм çан-çурăма, ал-урана, пите юн тулчĕ, пĕçертет.

Эпĕ каллех йытă çине пăхатăп. «Манпа юлтăрччĕ Хураçка», – шухăшларăм ассăн сывласа.

Çамрăксем пирĕн умри сак çине вырнаçса шăкăлшăкăл калаçса ларма тытăнчĕç. Хам-хам акă ман пата çитрĕ. Лайăххах тинкертĕм те – Хураçка мар иккен. Çапах ăна пусĕнчен ачашларăм. Кăсьере çăкăр пурччĕ те – хăналарăм. Çак йытта хамăр пата кăкарса хурас шухăш çуралчĕ. Ара, тусăма такамсем вăрласа кайнă-çке!

Картише чупса кĕтĕм. Пăяв шыратăп. Анчах тĕттĕмре ăçтан тупмалла ăна? Ĕнер чăх витинче курнăччĕ-ха та çавăнта кĕрес ĕнтĕ. Шиклене-шиклене вите алăкне уçрăм. Шăп. Кĕтесе çитрĕм. Пăява илес терĕм те алла темле çемçе япала çакланчĕ. Хăранипе ялтах сиксе тăтăм, ура темрен çакланчĕ те персе антăм. Сасартăк чăхсем çуйхашма тытăнчĕç. Çухалса кайрăм. Пӳлĕмрен епле сирпĕнсе тухнине ас тумасăтăп.

Шăв-шава илтсе пӳртрен аттепе анне сирпĕнсе тухрĕç. Мана курсан куçĕсене чарсах пăрахрĕç.

– Турăçăм, усал тавраш пулĕ ку. Пирĕн тĕпренчĕк çывăрать, – тесе алăка шалт хупса пӳртелле кĕрсе кайрĕç.

– Анне, атте! Эпĕ сирĕн Лисукăр-çке! – ĕсĕклерĕм пӳрте кĕрсе тăрсан.

Урамра мĕн ĕçпе çӳренине çывăх çынсене тĕпĕйĕрĕпе каласа кăтартрăм.

– Ачана кулянтарас мар. Ашшĕ, ыранах ăçтан та пулин йытă çури тупса кил, – йăвашшăн калаçрĕ анне.

Тепĕр кунне ирех картише тухрăм. Картлашка айккинче шап-шурă йытă çури ларать. Шăннă вăл, еплерех сиксе чĕтрет. Чим-ха, камсен ку? Атте илсе килме пултарайман. Ара, тин çеç пасара тухса кайрĕ. Аптăрарăм ĕнтĕ. Пĕчĕккĕскер ман тавралла чупкалама тытăнчĕ. Ним айăпсăр чуна çав тери хĕрхентĕм. Вара пӳрте илсе кĕтĕм. Апатлантарнă хыççăн кăмака çине ятăм. Нăйкăшса пĕр кĕтесе лăпчăнса выртрĕ. Лайăххах ăшăнтăр тесе аннен тутăрĕпе витсе ятăм.

Каç енне пурте киле пуçтарăнчĕç. Атте кăна çук. Вăл та кĕçех çитмелле. Çур сехет иртсен, чăн та, килчĕ пирĕн юратнă çыннăмăр. Тӳрех пысăк кутамккине салтма пулăшрăм. Унтан канфет-перемĕк, кулачă, пан улми тата ытти япала кăларчĕ. Йытă çури вара курăнмарĕ.

– Мана валли парне çук-ши? – шăтарасла пăхрăм атте çине.

Йăл кулчĕ вăл. Вара хĕвĕнчен шап-шурă йытă çури кăларчĕ.

Чим-ха, хайхискер кăмака çинчи пекех-çке.

– Килĕшмест-им? – терĕ атте пĕчĕккскере алла тыттарса.

– Мĕншĕн апла шухăшлатăн? Ара, çухалса кайрăм-ха, – мăкăртатрăм çурма сасăпа.

Пĕлетĕп, пĕр хам-хамне халĕ кама та пулин парса яраççех. Çавăнпа нимĕн те шарламастăп. Иккĕшĕ те илемлĕскерсемçке. Унччен те пулмарĕ, кăмака хыçĕнче тем шаплатрĕ.

– Çав кушаксене-и, – тесе аппа мăкăртатса унталла утăмларĕ.

– Ай-уй! Ку тата мĕне пĕлтерет? – тесе шурăскерне йăтса тухрĕ.

Унран самантрах туртса илтĕм тусăма. Атте парнеленине те çума чăмăртарăм.

Чи интересли – урăх никам та нимĕнле ыйту памарĕ. Ним пулман пекех çывăрма выртрăмăр вара.

Тепĕр ирхине юлташăмсене картише уçăлтарма илсе тухрăм. Пĕчĕккскерсем манран юлмаççĕ. Эпĕ ăçта – вĕсем унта. Пахчари йывăççем патне çитсен тĕлĕнсех кайрăм. Хураçка кĕлет çумĕнче ларать! Пире курсан хĕпĕртерĕ пулас, хӳрине пăлтăртаттарса хирĕç чупрĕ.

Тытса юратрăм. Ниçта кайса кĕрейми нăйкăшать вĕт апăрша!

Акă халĕ хыçран виçĕ тус чупать. Икĕ эрне ăçта çухалса пурăнчĕ-ха пирĕн Хураçка?

Пурне те пӳрте илсе кĕтĕм. Пурте тĕлĕнчĕç. Эпĕ çав тери савăнăçлă.

– Хураçкана киле хăварăпăр. Пасартан туяннине асаннӳне парăпăр, эсĕ картишрен тупса кĕнин хуçисем пур. Миша тетӳсен вăл, – терĕ атте ăнлантарса.

Макăрса ятăм. Ниепле те чарăнаймастăп.

– Мĕн ĕсĕклемелли пур. Ара, эсĕ вĕсемпе кашни кун курнăçма пултаратăн. Асаннӳ те, Миша тетӳ те кӳршĕрех пурăнаççĕ-çке, – йăпатрĕ анне самантрах.

Кăмăл тинех çаврăнчĕ. Вара Хураçкана кăмака çине ятăмăр. Икĕ шурă йытă çурине йăтса урама тухрăмăр.

Халĕ ӳсрĕ тусăм. Çынсем килсен тапăнса вĕрет. Хаяр.

Килте никам та çук чухне пӳрте илсе кĕретĕп. Пĕччен хăратăп-çке. Унпа вăхăчĕ те хăвăрт иртет тата!



© Даша МИХАЙЛОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

# Вăрттăн çиесшĕнччĕ

Килтисенчен тĕлĕнме пăрахаймастăп. Мана пахчари хăяра çитересшĕн мар. Хальлĕхе пулса çитеймен теççĕ. Кашни кун аппа юнаса: «Пĕри те пулин çухалтăр-ха. Эпĕ унта шутласа хунă», – тет ахăлтатса.

Эх, епле тутанса курас пĕрре çав хăяра! Шăрши çаплах сăмсана çурать. Вырсарни кун килте никам та çуккипе усă курса пахчана сирпĕнсе тухрăм. Паллах, тăварпа çăкăр тата çĕçĕ илме манмарăм. Пĕрне татса илес – хăратать. Ара, шутлă терĕç те. Çавăнпа хăяра икĕ пая пайларăм. Пĕри çĕр çинче юлать, теприне кĕсьене ярăнтаратăп. Вара кăмăллăн çеç çырманалла чупартăм.

Епле тутлă! Чĕлхе анса каймалла. Васкамасăр чăмлатăп, унсăрăн час пĕтет тутлă япала. Çапла киленсе ларнă вăхăтра хул пуççирен такам тытрĕ. Юлташăм Надя ĕнтĕ. Çак самантра мĕн тума килнĕ вăл мана? Çавăнпа çаврăнса та пăхмарăм. Çӳрет ĕçсĕр çапкаланса. Хăй мана нихăçан та нимĕн те çитермест, хыт кукар! Ĕнер те кăмăла пăсрĕ. Хĕвел çаврăнăшĕ шĕкĕлчекенскер виçĕ пĕрчĕ те памарĕ.

Ак каллех Надя хул пуççирен тытрĕ. Ай, тарăхтарать!

– Ил аллуна! Виççĕ шутлатăп! – терĕм сасса хăпартса.

Вăл пур çаплах тăрать. Çаврăнтăм та – аппа! Чыхăнса кайрăм.

– Мĕн вăрттăн çиетĕн? – тӳрех ыйту пачĕ хайхискер.

Çухалса кайрăм. Пĕлĕтрен татăлса анчĕ-и вăл? Аптăранă енне:

– Сĕтпе çăкăр, – терĕм пĕр хĕрелмесĕр.

– Аллунти татăка куратăп-ха, анчах сĕте мĕнле савăтпа илсе тухрăн? – çаплах хăпма шухăшламарĕ вăл.

Пуçа кăтăрт-кăтăрт хыçрăм. Карта кĕтессинче консерв банки выртнине курах кайрăм та унталла тĕллесе кăтартрăм. Те ĕненчĕ, те çук – çаплах ыйту пама чарăнмарĕ.

– Мĕншĕн килте апатланмастăн? Хăваласа кăларса ячĕç-им? – кăсăкланчĕ каллех.

– Усă сывлăшра апат лайăххах анать. Мĕн, кĕтӳре çӳренисене мантăн-им? Пĕр çулхине кутамккари çимĕçсене пĕчченех çисе янă эсĕ. Çут çанталăкра лайăх-çке тесе ялан чăмланă пулать. Хам курман-ха, асанне çапла çирĕплетет, – терĕм ун çине пăхнă май.

Пĕр хушă чĕнмерĕ аппа. Ман çине ĕмĕрте пĕрре курнă çын çине пăхнă пек тĕсесе тинкерчĕ. Аллине çĕклет-и-ха ку тесе шутсăр хăрарăм. Вара пĕрех çапать вăл тесе сĕрлеттерсе макăртăм.

– Мĕн пулчĕ? – сехĕрленчĕ аппа.

– Пуç ыратать, – терĕм ним калама аптăранипе.

Вăл мана хăй çумне пăчăртарĕ, пуçран ачашларĕ. Савăнтăм. Вара ăна ыталаса чăпăрт чуп турăм. Шăп çак вăхăтра унăн çӳçне тыттармалли заколка вĕçерĕнсе çĕре ӳкрĕ. Иксĕмĕр те ахăлтататпăр. Чим-ха, аппа ури çумĕнче хăяр выртать. Мĕнле асăрхаман-ха эпĕ ăна? Мĕн тăвас?

– Аппа, кур-ха, шапа! – терĕм суеçтерсе.

Вăл шари сухăрса карта çине хăпарса ларчĕ. Çак вăхăтра усă курса хăяра кĕсьене чиксе хума ĕлкĕртĕм.

– Халĕ ан карта çинчен. Каялла кайрĕ вăл, – терĕм кăмăллăн.

Ăна пулăшма тесе пытăм. Ура темĕскертен такăнчĕ те таçта çитиех сирпĕнтĕм. Кĕсьерен хăяр та тухса ӳкрĕ. Аппа асăрхарĕ ăна, самантрах ман ума çитсе тăчĕ.

– Кам пачĕ? – куçне чарса ыйтрĕ хайхискер.

Тĕрĕссине калас – çупкă туянатăп. Каллех суеçтерме тиврĕ.

– Урамран тупрăм, – терĕм кĕскен çеç.

Аппа ăна самантрах çисе ячĕ те хырăмне сăтăркаларĕ. Тутлă пулчĕ пулас. Вара чееен пăхкаласа:

– Атя, килтисене те пĕр вуннăшне татар, – терĕ.

Савăнсах килĕшрĕм. Пахчана çитсен аппа пĕççисене шарт çапрĕ.

– Кам каснă пирĕн çимĕçсене?! – кăшкăрчĕ вăл пĕтĕм ял илтмелле.

Шăп çак самантра тусăм килсе çитрĕ. Аллинче çăкăрпа хăяр. Аппа ун çине самантрах сиксе ӳкрĕ.



© Ольга ГАВРИЛОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

– Эппин, эсĕ хăтланнă-ха. Çын пахчине çаратма намăс мар-и? – çаплах чарăнаймарĕ аппа.

Айăпсăр çынна кӳрентерни кăмăла каймарĕ. Çавăнпа хам айăпа йышăнас терĕм.

– Хăяр çиес килчĕ. Касрăм та вăрттăн çырмана анса лартăм. Эсĕ те тутанса куртăн-çке, – терĕм чĕтренсе тухакан сассăмпа.

Сăмах та чĕнмерĕ. Аллине сулса таçта тухса кайрĕ. Пĕлетĕп, ку ĕçшĕн килтисем пуçран шăлмаççĕ. Каçхине пӳрте епле çывăрма кĕмелле-ши? Авă халех чĕтресе ларатăп.

# Хаваслă 2014 самант

## «Чие» сăмах каçмăш



### «А» сăмах каçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Çамрăк вăрман. 5. Чăвашсен эпосĕ. 6. Ĕç хатĕрĕ. 7. Пысăк вĕçен кайăк.

**Аялалла:** 1. Ятарласа пухнă е саланнă пĕр-пĕр япала. 2. Пӳрт-çурт пайĕ. 3. Пĕр-пĕр япалан çӳлти пайĕ. 4. Шупашкар районĕнчи ял.

### «Б» сăмах каçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Хĕç-пăшал. 5. Килти выльăх. 6. Лаша тĕсĕ. 7. Ĕçмеçиме.

**Аялалла:** 1. Пиçиххин тимĕр пайĕ. 2. Вĕçен кайăк. 3. Чăваш Республикинчи юхан шыв. 4. Йăх, несĕл, ăру.

### «Ă» сăмах каçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Якутин тепĕр ячĕ. 5. Шыври чĕр чун. 6. Çурçĕр Корейăн укçа единици. 7. Вăрманти вĕçен кайăк.

**Аялалла:** 1. Литература хайлавĕ. 2. А.Дюма çырнă «Три мушкетера» романри сăнар. 3. Савман ...на – саваламан сак (ват.сăм.). 4. «Майĕпен, хуллен, вăраххăн» синонимсен ретĕнчи тепĕр сăмах.

### «В» сăмах каçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Кăнтăр Америкăри çĕр-шыв. 5. Фазан йăхне кĕрекен туллă-сăртлă вырăнта пурăнакан кăркка. 6. Хĕветĕр Уярăн «Сук хĕрринче» калаври сăнар. 7. Кăнтăрти чĕр чун.

**Аялалла:** 1. Çĕпĕрти юхан шыв. 2. Ç.Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминчи Чаккапа Тайпин ывăлĕ. 3. Хĕр ача ячĕ. 4. Çывăх Хĕвел тухăçĕнчи çĕр-шыв.

### «Г» сăмах каçмăш

**Сылтăмалла:** 1. Чăваш халăх поэчĕ. 5. Вырăс архитекторĕ. 6. ... Дзогоев (Раççей футболисчĕ). 7. Яппунсен çырăвĕ.

**Аялалла:** 1. Авалхи Римра, Египетра шут доски. 2. Мари Элти паллă предприяти. 3. Шупашкарта çуралнă паллă кинорежиссер. 4. Яппунсен укçа единици.

## «Пирĕн яла пырса кĕрсен» аванворд



1. Ял хуçалăх машини. 2. Сĕт турттаракан транспорт. 3. Чие сорчĕ. 4. Ял хуçалăх специалисчĕ. 5. Пан улми сорчĕ. 6. Слива сорчĕ. 7. Тупăшран илекен укçан виçи. 8. Йĕс-йĕс карта, йĕс карта, йĕс картара тимĕр карта, тимĕр картара хĕрлĕ пăру.

**Тĕрĕс хуравсем тупсан паллă тунă юпара çĕр-шывĕпе палăрнă, чăвашри колхоз производствин новаторĕн, икĕ хут Социализмла Ĕç Геройĕн хушамачĕ вуланĕ.**

## Сăмах каçмăш вăчăри



1. Чăваш республикинчи хула. 2. Ç.Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминчи сăнар. 3. Çĕрпӳ районĕнчи ял. 4. Чăвашра тухакан хаçат. 5. Муркаш районĕнчи ял. 6. Телевидени пуçланнă чухне шутласа кăларнă ăслай. 7. Качча каякан хĕрĕн çи-пуçĕн пайĕ. 8. Çар çыннин карттусĕ çинчи паллă. 9. Чăваш халăх писателĕ. 10. Столярăн ĕç сĕтелĕ. 11. Чечексем лартнă вырăн. 12. Строительство сооружений колоннăсем çине вырнаçтарнă çӳлти пайĕ. 13. Пĕр-пĕр завода е предприятие кĕнĕ чухне усă куракан хатĕр. 14. Врач. 15. Чăваш халăх писателĕ. 16. Славянсен, вырăссен мифологийĕнчи выльăх-чĕрлĕх тата пуянлăх турри. 17. Ял хуçалăх продукцийĕ. 18. Спорт вăййи.

*Юрий* ***ФРОЛОВ*** (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**